чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи
кăрлачăн
21-мĕшĕнче
тухма тытăннă
1918 çулхи
нарăс уйăхĕнчен
тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи
çурлан
30-мĕшĕнче
"ХЫПАР" ятпа
тепĕр хут тухма
пуçланă

ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

246 /26401/№ Кĕçнерни кун, 2013, раштав (декабрь), 26 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2013 çулхи раштавăн 24-мĕшĕнче кăларнă 136-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн пурлăх хутшăнăвĕсене йĕркелессин патшалăх политикине пурнăçлас ĕçе тӳпе хывнăшăн тата Чăваш Республикин патшалăх граждан службинче нумай çул ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерствин пай пуçлăхне **Валентина Андреевна АХМЕЕВĂНА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

ветеринарири тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Муркаш районĕнчи выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станцийĕ» бюджет учрежденийĕн Мăн Сĕнтĕр участокĕн ветеринари лечебницин заведующине **Нина Николаевна ПЕТРОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВЕТЕРИНАРИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВРАЧĔ»** хисеплĕ ят панă;

культурăна, телерадиохыпарлава аталантарас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн федерацин «Пĕтĕм Раççейри патшалăх телекурав тата радиохыпарлав компанийĕ» унитари предприятийĕн «Чăваш Ен» патшалăх телекурав тата радиохыпарлав компанийĕ» филиалĕн телекуравăн информаци программисен службин пуçлăхĕн çумне **Лидия Степановна ПЕТРЕЙКИНĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн «Шупашкарти сăра тăвакан «Букет Чувашии» фирма» акционерсен уçă обществин сивĕтекен хатĕрсен машинистне **Валентина Васильевна МИХАЙЛОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

финанс ĕç-хĕлĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерствин тĕп специалистне **Людмила Алексеевна ЕФИМОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ЭКОНОМИСЧĔ»** хисеплĕ ят панă.

Правительствăра

Хăтлă Шупашкар мĕншĕн тĕксĕм?

© Республика Пуçлăхне тĕп хула центрне çеç «çулатни» тивĕçтермест.

«Кăтартусем ăнăçлă, анчах татса памалли уйрăм ыйтусем пур…» – çапла хакларĕ ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн ĕнерхи ларăвĕнче республика Правительствин вĕçленсе пыракан çулталăкри ĕç-хĕлне пĕтĕмлетнĕ май.

Кабинет кăçал 26 лару ирттернĕ, вĕсенче 506 ыйтăва пăхса тухнă, çав шутра 75-шĕ – саккунсен проекчĕсем. Çавна май саккун-норма никĕсне çирĕплетес енĕпе пысăк ĕç пурнăçланă темелле. Тĕп ыйтусен шутĕнче – РФ Президенчĕн пĕлтĕрхи çу уйăхĕнче кăларнă указĕсене пурнăçлассипе çыхăннисем. Ку енĕпе нимĕнле кăлтăк-чăрмав та пулмалла мар, терĕ Михаил Васильевич.

Ăнăçусен шутĕнче М.Игнатьев Пĕтĕм Раççейри чи хăтлă хуласене палăртмалли конкурс кăтартăвĕсене те асăннĕ. Конкурса шăпах çак кунсенче пĕтĕмлетнĕ, кăмăллă хыпар пур: Шупашкар тупăшура 2-мĕш вырăн йышăннă /1-мĕшĕнче – Калуга/. Михаил Васильевич Чăваш Ен тĕп хули 2001 çулта асăннă конкурсра мала тухнине аса илтернĕ май Шупашкар влаçĕсене тата та çине тăрарах ĕçлеме, çитес çул 1-мĕш вырăн йышăнма сунчĕ.

Ларăвăн кун йĕркинчи ыйтусем çине куçнă май чи малтанах вице-премьер – сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова сăмах илчĕ. Граждансен уйрăм категорийĕсене коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлес енĕпе социаллă пулăшу кӳмелли саккуна кĕртмелли улшăнусемпе паллаштарчĕ. Халĕччен пулăшу виçи çирĕп пулнă – тĕрлĕ категорин 591-рен пуçласа 700 тенкĕ таран. Федераци саккунне çăмăллăхçăсене усă куракан пулăшу ĕçĕсен калăпăшне кура тĕрев парассипе çыхăннă улшăнусем кĕртнĕ, республика саккунне те улăштармалла. Çапла вара федераци çăмăллăхçисем малашне шăпах хайхи тăкаксене кура тĕрлĕ виçепе пулăшу илĕç – 1 пин тенкĕ таранах пулма пултарать.

Хытă сийлĕ автомобиль çулĕпе çыхăнтарнă ялсене палăртмалли критерисене çирĕплетрĕç. Вице-премьер – транспорт министрĕ Михаил Янковский палăртнă тăрăх – автомобиль çулĕ çинче 100 метртан инçе мар вырнаçнă, хытă сийлĕ çул почта, администраци çурчĕ, шкул, ача сачĕ е çавнашкал урăх объект патне çитет пулсан кунашкал ялсем хытă сийлĕ çулпа тивĕçтернĕ шутланаççĕ. Асăннă йышши объектсем çук пулсан вара? Кун пек чухне ялăн аслă çулĕпе асфальт иртнине /яла пĕр-пĕр çырма икке пайлать тĕк – çав çырма таран пулмалла/ шута илĕç.

Кун йĕркинче вĕрентӳпе çыхăннă ыйту йышлă пулчĕ. Çавна май Владимир Иванов министрăн çине-çинех сăмах илме тиврĕ. Ача сачĕсене çӳрекен ачисемшĕн ашшĕ-амăшĕ компенсаци илмелли йĕркене çирĕплетрĕç. Çав виçе 1-мĕш ачашăн 20% танлашать, 2-мĕшĕшĕн – 50, 3-мĕшĕшĕн тата ун хыççăнхи ачасемшĕн – 70%. Садиксенчи тӳлев виçи вара тĕрлĕ – пĕр куншăн 10-ран пуçласа 50 тенкĕ таран. Шупашкарта кăшт пысăкрах та пулма пултарать. Уйрăм çынсем уçнă ача сачĕсенче – хаклăрах. Çакна министр унти апатлану пахалăхĕ пысăкраххипе сăлтавларĕ. Сăмах май, садик тăкакĕсем пĕр ача пуçне хулара уйăхра вăтамран 10 пин тенкĕпе танлашаççĕ, ялта сахалрах – 5 пин тенкĕ. Ашшĕ-амăшĕ çак виçен пĕр пайне çеç тӳлет – вăтамран 1,2 пин тенкĕ, ыттине бюджет саплаштарать.

Тепĕр ыйту та укçапах çыхăннă – стипендисем пирки. В.Иванов тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕнчи стипендисен виçипе паллаштарчĕ: вăтам професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсенче – 436, культура институтĕнче – 1270, ЧПУра – 1800, пединститутра – 1400, ял хуçалăх академийĕнче – 1100 тенкĕ. Ыттисем – федераци тытăмĕсем, техникумсемпе культура институчĕшĕн вара республика яваплă – вĕсенчи стипендисен виçине пысăклатма йышăнчĕç. Чăн та, ӳсĕме студентсем «урра!» кăшкăрса йышăнасси иккĕленӳллĕ, нумай хушăнмасть-çке: вăтам професси заведенийĕсенче 487 тенкĕ пулать, институтра – 1340.

Виççĕмĕш е ун хыççăнхи ача çуралнă çемьесене 2014 çулта уйăхсерен тӳлев памашкăн кашни çын пуçне тивекен тупăш виçине 15309 тенкĕ шайĕнче çирĕплетрĕç. Халĕччен вăл 13,5 пин тенке яхăн пулнă. А.Самойлова пĕлтернĕ тăрăх – кăçал республикăра «виççĕмĕш е ун хыççăнхи» 2,5 пин пепке çут тĕнчене килнĕ, асăннă тӳлеве 1,5 пин çемье илет. Тӳлев виçи 6,1 пин тенкĕ ытларах пулнă. Шел те, хăшĕсем тивĕçлĕ документсем тăратманнине кура тӳлевсĕр юлаççĕ иккен. Çакăнта, М.Игнатьев шухăшĕпе, ашшĕ-амăшĕ ĕç укçин виçине çирĕплетмелли справкăсем тăратайманнин витĕмĕ те пур. «Документсем тăратма тăрăшмалла, юта кайса çӳремесĕрех уйăхсерен 6 пин тенкĕ ытла илме май пур вĕт – сахал мар укçа», – терĕ вăл.

Çитес çул Республика кунне ирттерме хатĕрленес ыйтăва сӳтсе явăрĕç. Чăн та, вице-премьер – ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов паллаштарнă план М.Игнатьева тивĕçтермерĕ, Александр Степанович «уйрăм мероприятисемпе уяв сывхарнă май çине тăрарах ĕçлĕпĕр» тенипе те тӳрре тухаймарĕ. Михаил Васильевич палăртнă тăрăх – мероприятисем пирки халех тĕплĕ шухăшламалла, плана çĕнĕлĕхсем кĕртмелле. Унсăрăн кайран васкама тивĕ. Çĕнĕлĕх тенĕрен – ЧР Пуçлăхĕ юлашки вăхăтра Мускавра çине-çинех пулнă май çĕр-шыв тĕп хули кăçал Çĕнĕ çула çĕнĕлле хитреленсе кĕтсе илни çинчен каларĕ. Шел те, Шупашкар пирки апла калаймăн. «Правительство çурчĕн умне те йĕркеллĕ илемлетмен. Çутă ытларах кирлĕ! Светодиод сеткисем темле хаклă мар вĕт! Çанталăка кура юр пулмасса та пултарать, çавна май ку енĕпе пушшех ытларах ĕçлемелле», – терĕ вăл. Тĕп хула влаçĕсем хирĕçлесе нимĕн те калаймарĕç. Уявччен темиçе кун çеç юлчĕ те – юрăсенче «шурă Шупашкар» тесе мухтакан тĕп хуламăр уннчен çуталсаилемленсе ĕлкĕрĕ-ши?

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Хавхалантару

Ушкăнпа – Кремльти Ёлкăна!

Шупашкарти чукун çул вокзалне вăхăтра çитес тесе Александра Вострейкинăпа амăшĕ Тамара Тимофеевна ирех канăçне çухатрĕç. Чăматана йăлтах хунă-и, фотоаппарата чикме манман-и – Муркаш районĕнчи Калайкасси вăтам шкулĕнче çиччĕмĕш класра вĕренекен хĕр ача, çĕр-шывăн тĕп хулине пĕрремĕш хут çула тухаканскер, пуриншĕн те пăшăрханать. Хăвăрт утассипе республикăра хăйĕн ӳсĕмĕнчи çамрăксен хушшинче палăрса тăрать вăл. Спортри çитĕнĕвĕсене кура Сашăна Раççей Президенчĕн Ёлкине çитсе курмалли билетпа хавхалантарнă.

Раштавăн 26-мĕшĕнче Кремльти Патшалăх керменĕнче иртекен çулленхи асăннă уява кăçал Чăваш Енрен 50 ача хутшăнĕ. Вĕсен йышĕнче – ача çурчĕсемпе интернат шкулсен воспитанникĕсем, нумай ачаллă çемьесенче çитĕнекенсем, службăри тивĕçне пурнăçласа пуçне хунисен ачисем, вĕренӳре, спортра е общество ĕçĕнче пултарулăх кăтартакансем, олимпиадăсенче мала тухнă шкул ачисем. Делегацире хальхинче – федерацин Атăлçи округĕ йĕркеленĕ «Ачалăх çăлтăрĕсем» пултарулăх конкурсĕнче палăрнисем те.

Пысăк йыша çул çӳрев вăхăтĕнче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессишĕн яваплă 12 çынна палăртнă: вĕсен йышĕнче – педагогсем, тухтăрсем, ШĔМ ĕçченĕсем. Тăван хуларан ăсатнă май ачасене телейлĕ çул пиллекенсен хушшинче ашшĕ-амăшĕпе пĕрлех федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров тата ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕн пĕрремĕш çумĕ Светлана Петрова пулчĕç. «Чăваш Ен ятне ан ярăр. Уява ытти субъектран пыракансен пирĕн регион халăхĕ пирки мĕнлерех шухăш çураласси сирĕнтен килет. Наци япалисене, ташши-юррине кăтартма ан вăтанăр», – ырă сунчĕ Светлана Владимировна.

Мускавра çамрăк ентешĕмĕрсен тунсăхлама вăхăт юлмĕ. Вĕсене Ёлкăсăр пуçне музейсенчи экскурсисем те, паллă артистсемпе тĕл пулусем те кĕтеççĕ.

Чăваш Ен ачисен тепĕр ушкăнĕ вара раштавăн 28-мĕшĕнче РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич йĕркелекен Çĕнĕ çул уявне çитсе курĕ.

■ **Ирина ИВАНОВА**

Аквайсерсем сивĕрен хăрамаççĕ

Чăваш Енри аквайсерсен федерацийĕн спортсменĕсем Тюмень тăрхĕнче иртнĕ Раççей хулисен Кубокĕнчен медальсемпе тавăрннă. Унта сивĕ шывран хăраман 200 ытла çын хутшăннă.

Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнчех пирĕн ентешсем 1 ыйтăнпа 2 бронза медаль çĕнсе илнĕ. Валерий Губанькин брасс енĕпе чи лайăх кăтартупа палăрнă, 25 метрлă дистанцире Куславккари Светлана Ерпылева çĕнтернĕ. Ирĕклĕ мелпе ишсе Татьяна Александрова виççĕмĕш вырăн йышăннă, вăлах тепĕр кун марафонçăсен тупăшăвĕнче иккĕмĕш пулнă. Унăн тантăшĕ Алексей Лисов 1000 метрлă дистанцире ăмăртса пухмача «кĕмĕлпе» пуянлатнă. ЧР Физкультурăпа спорт министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – унăн кăтартăвĕ республикăшăн питĕ пысăк çитĕнӳ: спорт кун-çулĕнче пĕрремĕш хут вăрăм дистанцире пирĕн спортсмен пьедестал çине хăпарнă.

А.ПЕТРОВ.

«Яту сан юлĕ ĕмĕре»

Çакăн пек ятпа иртнĕ пултарулăх каçĕ Элĕкри тĕп вулавăшра. Ăна чăваш çыравçи, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Валентина Элпи çуралнăранпа 100 çул çитнине халаллаллă. Мероприятие чăваш кĕнекине кăмăллакан вулакансем хутшăннă.

Библиотека ĕçченĕсем çыравçа сума суса «Çулталăк юбилярĕ. Валентина Элпи: 100 çул» пресс-релиз, «Пултаруллă çыравçă» кĕнеке куравĕ хатĕрленĕ. Вĕсем пухăннисене писателĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен тĕплĕн каласа панă. Унтан унăн кĕнекисем тавра сăмах пуçарнă. «В.Элпи кĕнекисенчи сăнарсем пурте – пурнăçран илнĕскерсем. Çыравçă вулакана юратса, ăшшăн, чунран çырни куç кĕрет. Вĕсене ăша хывсан хăвăн вăйна, пултарулăхна шанма пуçлатăн. Хавхалану, хăват çуралать», – шухăшне палăртнă А. Васильева пенсионерка. Элпин малтанхи хайлавĕсем «Хыпар», «Советская Чувашия» хаçатсенче пичетленнĕ. Пĕрремĕш кĕнеки («Куçса çӳрекен çурт») вара 1956 çулта Мускавра кун çути курнă. Халĕ вăл – 20 кĕнеке авторĕ. Уйрăмах паллăраххисем: «Пулас кинсем», «Юратнă мăшăрсăр», «Малтанхи савни», «Качча кайсан» тата ытти те.

С.ИВАНОВА.

«Тăван çĕр пуянлăхĕ»

Çулсеренех çакăн пек конкурс иртет Çĕнĕ Шупашкарти историпе ӳнер музейĕн комплексĕнче. Йĕркелӳçисем – хула администрацийĕн вĕрентӳ пайĕ, хулари мониторинг центрĕ, А.И.Андриянов ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен пултарулăхне аталантармалли центр, музей ĕçченĕсем.

«Истори тата археологи», «Истори тавра пĕлĕвĕ» секцисен ĕçĕсене хула тата республика историйĕпе кăсăкланакан çамрăксемпе шкул ачисем хутшăннă. Химиксен хулинчи чи лайăх вĕрентекенсем экспертсен йышĕнче пулнă. Асăннă мероприяти ăслăлăхпа пултарулăх уявне çаврăннă. Тавра пĕлӳ вулавĕнче çĕнтерӳçĕсене чыслана, парнесемпе хавхалантарнă.

Р.РОЗОВА.

Ĕçлĕ çӳрев

Хăват хушăнать – тупăш ӳсет

«Шупашкарти «Тароупаковка» АУО продукци туса кăларма тытăннăранпа кăçал 20 çул çитрĕ. Экономика-финанс кăтартăвĕсене лайăхлатас тĕллевпе предприяти модернизаци проекчĕпе килĕшӳллĕн производство лаптăкĕсене пысăклатсах пырать. Ĕнер акционер обществи çĕнĕ цеха хута янă май ирттернĕ уява Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăннăччĕ. Унта экономика министрĕ Владимир Аврелькин тата Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов та пулчĕç. Михаил Васильевич рабочисемпе тĕл пулчĕ, ыйтăвĕсене хуравларĕ. Производство ĕçĕпе, общество туса кăларакан продукци пахалăхĕпе кăсăкланчĕ.

Тĕл пулура «Тароупаковка» гендиректорĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Олег Таланов Çĕнĕ çул çывхарнă май предприяти умĕнчи тĕллевсемпе паллаштарчĕ, хăйсен таварне суту-илӳ тăвакансем асăрхаччăр, тавлашсах туянма тăрăшчăр тесе малашне пахалăха лайăхлатас енĕпе çине тăрсах ĕçлемеллине, «Тароупаковка» йышши предприятисене тупăшулăхра парăнмалла маррине палăртрĕ.

Акционер обществи – Атăл тăрăхĕнчи картон курупки туса кăларакан чи лайăх предприятисенчен пĕри. Цеха ку чухнехи пысăк тухăçлă оборудованипе тивĕçтернĕ, уйăхра вăл 6 млн ытла тăваткал метр хутламлатнă картон туса кăларать. Производствăри пур линире те компьютер пулăшăвĕпе анлăн усă кураççĕ.

Предприяти туса кăларакан тавар экономикăн тĕрлĕ отрасльне – машинăсем тăвакан производствăран пуçласа ял тата фермер хуçалăхĕ таранах – ăсанать.

2013 çулхи кăрлач-юпа уйăхĕсенче потребительсене 360,6 млн тенкĕлĕх тавар ăсатнă, производство индексĕ 110,2% танлашнă.

Михаил Игнатьев акционер обществин кăçалхи экономика-финанс кăтартăвĕсем курăмлă пулнине палăртрĕ. Вăл ĕç укçи 13,5% ӳснипе те кăмăллă. Ку – республикăн вăтам кăтартăвĕнчен пысăкрах. Хутламлатнă картон рынокра хăйĕн вырăнне тупнă, тупăшулăхра тӳсĕмлĕ терĕ.

Калаçу демографи лару-тăрăвĕ пирки те пычĕ. Кунта ĕçлекен 211 çынран çурри ытла – хĕр-хĕрарăм. АУО ертӳлĕхĕ декрет отпускне каякансене хавхалантарсах тăрать. Чылайăшĕ çывăх вăхăтра ача амăшĕ пулма хатĕрленет.

– Çакăншăн эпĕ савăнатăп çеç, – терĕ Олег Борисович гендиректор. – Эпĕ хам та пилĕк ача ашшĕ.

■ **Валентин ВАСИЛЬЕВ**

Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк, юр çукалать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен секкунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 2, каçхине 4 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 759 мм, сывлăшри нӳрĕк 91 процент.

Кун тăршшĕ 6 сехет те 57 минут.

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен секкунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5, каçхине 3 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 762 мм, сывлăшри нӳрĕк 84 процент.

Кун тăршшĕ 6 сехет те 57 минут.

КУН хыççăн КУН

56-04-26

Эрне кун – Олимп çулăмĕн уявĕ

Ыран, раштавăн 27-мĕшĕнче, Шупашкарта Олимп çулăмĕн эстафети иртет. Çавна май эрне кунхи уйрăмлăхсемпе тепĕр хут паллаштаратпăр.

Эстафета кăнтăрла 12 сехетре чукун çул вокзалĕнче старт илĕ. Олимп вăййисен тĕп символĕ хула урамĕсем – Николаев космовант, Калинин, Константин Иванов, Мускавпа Максим Горький проспекчĕсем, Университет, Павлов мичман, Гузовский, Карл Маркс, Гагарин, Чапаев – витĕр тухса «Олимпийский» стадиона хĕмленĕ. Унта 18 сехетре пысăк та савăнăçлă концерт пуçланĕ. Куракансем çавăн пекех çулăма Хĕрлĕ лапамра 17.30 сехетре кĕтсе илме пултараççĕ.

10 сехетрен пуçласа 22 сехетчен эстафета иртекен çулсемпе автомобильсене тата общество транспортне вăхăтлăха çӳреме чарĕç. Эстафета иртекен урамсенче тăватă кустăрмаллă «урхамахсене» лартса хăварма юрамасть. Çав кун полицин тата ытти ведомствăн 3000 яхăн ĕçченĕ йĕркелĕхшĕн яваплă пулĕ. Тепĕр çĕнĕлĕх – чылай предприятипе организацире ĕçлекенсем валли канмалли кун тума сĕннĕ. Шкулсенче спортпа сывлăх кунĕсем иртĕç.

Олимп çулăмĕн уявне хутшăнайманнисем эстафетăна тӳрĕ эфирта Наци телекуравĕпе пăхма пултараççĕ.

А.МИХАЙЛОВ.

Тĕл пулу

Чемпионка спортра та, вĕренӳре те маттур

Италири Трентино хулинче иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери хĕллехи Универсиада вĕçленчĕ. Раççейĕн пĕрлешӳллĕ командишĕн ăнăçлă – унта пирĕн спортсменсем 15 ылтăн, 16 кĕмĕл, 19 бронза медаль çĕнсе илсе пьедесталăн чи çӳллĕ карлашки çине хăпарчĕç.

Студентсен ăмăртăвĕнче уйрăмах биатлонçăсем палăрчĕç, вĕсен пухматĕнче пурĕ – 8 награда. Вĕсенчен виççĕшĕ – пирĕн ентешĕн, Шупашкарти Олимп резервĕсен 2-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптакан Татьяна Семеновăн. Аса илтеретпĕр: Çĕнĕ Лапсар пики спринтерсен тупăшăвĕнче тата 10 километрлă дистанцире ăмăртса икĕ «бронзăпа», эстафетăра вăй виçсе «ылтăнпа» пуянланчĕ. Çак кунсенче пултаруллă спортсменка тăван ене таврăнчĕ, унпа республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тĕл пулса калаçрĕ. Чăннипех калаçрĕç – тĕл пулу диалог евĕр иртрĕ. Михаил Васильевич тӳрех чемпионкăна сăмах пачĕ.

«Эпĕ хамăн кăтартусемпе питĕ кăмăллă. Виçĕ медаль те маншăн питĕ паха, уйрăмах – «ылтăн». Тĕнче ăмăртăвĕнче çĕнсе илнĕ пĕрремĕш чи пысăк награда-çке. Кашни стартра мала тухас тĕллевпе пур вăйран тăрăшрăм. Мана ăнчĕ – перес енĕпе те, чупас енĕпе те. Юлашки ăмăртура кăна кĕтменлĕхсем пулчĕç. Пур пĕр Универсиадăра пĕтĕм енĕпе те килĕшрĕ: йĕлтĕр трассисем лайăх, темелли вырăнсем çĕнĕ. Италире çанталăкĕ ăшă, тавралăхĕ те илемлĕ», – терĕ çичĕ çулта чухнех йĕлтĕр çине тăнă Татьяна Семенова.

«Биатлон спортăн илĕртӳллĕ тĕсĕ. Çавăнпа ăмăртусенче мала тухма та çăмăлах мар. Эсир вара хăвăр çитĕнĕвĕрпе пире савăнтартăр. Малашне те ăсталăхăра туптаса çĕнĕ çĕнтерӳсемпе тĕлĕнтересседжи шанатăп. Олимп тӳпине хăпарма ăнăçу сунатăп», – палăртрĕ Михаил Игнатьев спортсменкăна унăн тренерне Анатолий Акимова сертификатсемпе чысланă май.

Тĕл пулура тĕрлĕ ыйтăва хускатрĕç. Çавăнпа спортсменка ăмăртусене тăван республикăрах хатĕрленме услови сахалли çинчен сăмах пуçарни те – Чăваш Ен Пуçлăхĕшĕн кĕтменлĕх пулмарĕ. «Олимп резервĕсен 2-мĕш спорт шкулĕн никĕсĕ çинче биатлон центрĕ хута каймалла. Тепĕр çулах йĕлтĕр трассине, спорт керменне çĕнетме тытăнăç. Çак ĕçе пурнăçлама тепĕр çул федераци бюджетĕнчен чылай укçа-тенкĕ уйăрĕç. Малашне унта биатлонçăсем валли майсем çителĕклех пулĕç», – пĕлтерчĕ ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников.

Тĕл пулăва хутшăннă Шупашкарти политехника институчĕн директорĕ Александр Акимов та сăмах илчĕ. Вăл аслă шкулта вĕренекенсенчен 70 проценчĕ спортпа туслине палăртрĕ. «Татьяна Семенова вĕсен йышĕнче чи курăмли: спортра кăна мар, вĕренӳре те маттур, ĕçре те тăрăшуллă, çав вăхăтрах сăпайлă та илемлĕ – чăн-чăн чăваш пики», – терĕ Александр Петрович хăйĕн вĕренекенĕпе мухтанса.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

Аталану çулĕпе

«АККОНД-ТРАНС» руле çирĕп тытать

Реклама

«Манăн Раççей картти пур, унта транспорт компанийĕнче ĕçленĕ çулсенче хам пулнă хуласене пĕчĕк хĕрессемпе паллă тăватăп. Халĕ çав карттăна Инçет Хĕвел тухăçăр пуçне пĕтĕмпех хайхи хĕрессемпе ӳкерсе тултарнă!» – мăнасланарах каласа парать «АККОНД-ТРАНС» АХО водителĕ Олег Павлов. «Тепĕр чух пирĕн водительсем темиçешер эрне е уйăхĕпех çул çинче, – сăмаха тăсать предприятин 2-мĕш автоколоннин пуçлăхĕ Владимир Михеев, – инçе командировкăсенче сухал ӳстерсе яма ĕлкĕрни те пулать». «Пурнăç – шоссе, пурнăç тăршшĕ шоссе…»

«АККОНДăн» туслă çемйинче

«АККОНД-ТРАНС» «АККОНД» компанисен ушкăнне кĕрет. Ку вара – хушма яваплăх. Транспорт компанийĕн экономичĕ Маргарита Полушкина палăртнă тăрăх – «Раççейре кăна мар, чикĕ леш енче те хăйĕн пылак продукцийĕпе ят-сум çĕнсе илнĕ кондитер фабрикин шайне тивĕçтермелле». Хăйĕн автопаркĕ кирек хăш производствăшăн та ăнăçу никĕсĕ, анчах апатçимĕç промышленноçĕнче ку уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Продукци ăна туянаканăн сĕтелĕ çине хăвăртрах çитмелле вĕт. Çавăнпа фабрикăна чĕр таварпа тивĕçтерессине, унăн хатĕр продукцине потребитель патне илсе çитерессине 2006 çул вĕçĕнче 1852-мĕш автоколонна никĕсĕ çинче йĕркеленĕ транспорт компанине шаннă. Унччен грузсене ют çĕр-шывсене «Совтрансавто», паллă ытти фирма леçнĕ, куншăн фабрикăн валютăпа пысăк укçа тӳлеме тивнĕ. 2009 çултанпа çак ĕçе те «АККОНД-ТРАНС» хăйĕн çине илнĕ, вăл Çĕр-шывсен хушшинчи груз турттаракансен ассоциацийĕн членĕ пулса тăнă.

Шăпах «АККОНД» тĕревлени, унăн генеральнăй директорĕ Валерий Иванов малашлăха курса тăни, предприяти ертӳçисем палăртнă тăрăх, транспорт компанине паянхи шая çĕкленме май панă.

– Валерий Николаевича миçе çул пĕлетĕп – унăн ĕçлес пултарулăхĕнчен тĕлĕнсе пĕтерейместĕп, – йышăнать С.Кириллов. – Апатçимĕç промышленноçĕн ыйтăвĕсене кăна мар, строительствăна та, транспорта та, ял хуçалăхне те лайăх пĕлет – «АККОНД» компанисен ушкăнĕн тытăмĕнче «АККОНД-АГРО» фирма ăнăçлă ĕçлет. Спорта, культурăна пулăшать, патшалăх ĕçне пурнăçлать – ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ. Пытармастăп: тепĕр чух хамăр компанири çитменлĕхсене асăрхасан «Валерий Николаевич куриччен тӳрлетмелле» тесе шухăшласа илетĕп. Çук, вăл маларах асăрхама ĕлкĕрнĕ – тивĕçлĕ хушу парать. Унпа пăлахая переймĕн: хăй ырми-канми ĕçлет, ыттисене те тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме хистет. Ертӳçĕн çапла пулмалла та – ĕçшĕн çунмалла...

Пирĕн професси – руль умĕнче

«АККОНД-ТРАНС» АХО паян – Чăваш Енри кал-кал аталанакан чи пысăк транспорт компанийĕсенчен пĕри. Предприяти груз турттарассин калăпăшне çуллен ӳстерет – «производствăна кашни çул пысăклатакан «АККОНДран» юлмастпăр». 2012 çулта 112,2 пин тонна груз турттарнă, кăçал ытларах пулать – кăрлач-чӳк уйăхĕсенчех виçе 110,4 пин тоннăпа танлашнă. Вăтамран ӳсĕм 104,4% пулĕ.

Халĕ кондитер фабрикипе кăна ĕçлени сахал ĕнтĕ – паян унăн саккасĕсем пĕтĕм калăпăшăн 40% тан. Ытти 60% «АККОНД-ТРАНС» айккинчи организацисем валли пурнăçлать. Пур енĕпе те ĕçлет: «Кĕске вăхăтра палăртнă вырăна кирек мĕнле груза та илсе ситеретпĕр – пысăк мар курпукаран пуçласа 20 тонна таякан груз таранах». Компанин техника паркĕнче тĕрлĕ тĕллевлĕ транспортăн 180 единици – хула, республика тăрăх груз турттармалли пысăк мар машинăсенчен пуçласа федераци тата çĕр-шывсен хушшинчи магистральсемпе çӳрекен, 30 тонна таран груз илекен фурăсем таранах.

Шупашкартан тĕпрен илсен кондитер фабрикин продукцине илсе каяççĕ. Диспетчерсем кунĕн-çĕрĕн ыраврa: транспорт каялла пушăлла ан таврăнтăр – грузсем тупмалла. «Вăт, çавăрттаратпăр машинăсене Раççей тăрăх, – ĕç вăрттăнлăхĕпе паллаштараççĕ вĕсем. – Каялла чылай чухне çаврăмсем туса, тĕрлĕ еннелле пăрăнса таврăнма тивет: пĕр хулара пушатаççĕ, унтах тиеççĕ – малалла! Шупашкара çитиччен тепĕр чух груза темиçе хут улăштарма ĕлкĕреççĕ». Çивĕч конкуренци условийĕсенче груз турттарассине çапла йĕркелени хăй хаклăха чакарма май парать, ку транспорт компанийĕшĕн те, унăн клиенчĕсемшĕн те чылай йӳнĕрех ларать.

Рынокра чылай çул ĕçлесе предприяти саккас паракансен кăмăлне туллин тивĕçтерме вĕренсе çитнĕ. Клиентсем «АККОНД-ТРАНСпа» ĕçленин меллĕ енĕсене пĕлеççĕ ĕнтĕ. Груз турттарассипе çыхăннă яваплăха хăйĕн çине илсе компани кирек хăш груз тĕлĕшпе те хушма страховани майĕсемпе тивĕçтерет. Машина груз тиемелли е ăна пушатмалли вырăна шăп та лăп палăртнă вăхăтра пырать, пăтăрмах сиксе тухсан автопуйăса çул çинчех улăштарма пултараççĕ – клиент сиен тӳсмест.

– Калăпăр, Краснодара каятпăр. Çул айккинче фура ларать – ваннă. Эпир груза пушатнă, каялла таврăнатпăр, ку машина вара çав вырăнтах. Çулла пулсан юрать-ха, хĕлле вара мĕн тумалла? Пирĕн апла мар, компани хăйĕн сотрудникĕсене пăрахмасть. Водительсен, груз хăрушсăрлăхĕ – малти вырăнта. Çапла, çул çинче техника чăхăмласси пулать, анчах пирĕн кашни автомобиле спутник навигацийĕн системипе тивĕçтернĕ, офиспа кирек хăш вăхăтра та çыхăнма пултаратпăр. Юсас е автомобиле сывăхри автосервиса буксирпа илсе каяс тĕлĕшпе чăрмав çук – пĕтĕмпех кал-кал ĕçлет, – теççĕ компани водителĕсем.

Ĕç условийĕсене лайăхлатма ăнтăлни те сотрудниксемшĕн тăрăшнипех сăлтавланнă. Водитель рейсран таврăнать – душ, кану пӳлĕмĕ пур. Машинăпа вара пулăшу службисем ĕçлеççĕ – унăн каллех çула тухмалла. Предприяти директорĕн хăйĕн те транспорт отраслĕнчи ĕç опычĕ пысăк, аялтан пуçланă темелле – водитель, механик пулнă, техникăна пĕлет, çавна май унăн юсавлăхне тĕп вырăна хурать, çакă транспорт çул çинче ванасран сыхланма пулăшать.

Пус тенке упрать

Автопарк кивĕ мар, ăна çĕнетсех тăраççĕ. Кăçал кăна 5 Scania автомбиль туяннă. Анчах çĕнни яланах киввинчен лайăх мар иккен. Сăмах акă мĕн пирки: компани аслăрах автомобильсем çине газ оборудованийĕ вырнаçтарнă, ку топливо тăкакĕсене чакарма пулăшать. «Пысăк çĕнĕ грузовиксем вара – пурте дизель тата турбодизель вăй агрегачĕсемпе. Газобаллон оборудованийĕ лартма май пур бензин двигателĕсем çăмăл машинăсемпе пĕчĕк грузовиксем кăна. Дизтопливăпа литрĕшĕн 32 тенкĕпе заправка тăватпăр, газ хакĕ вара 10 тенкĕ – уйрăмлăхне туятăр-и?» – ӳпкелет директор. Патшалăх ертӳçисем автомобильсен газ топливин рынокне аталантарма тăрăшаççĕ, çĕр-шыв автопромĕ вара çак пуçарăва йышăнасшăнах мар – çапла пулса тухать вĕт. «Акă мĕншĕн хамăрăн автомобильсен «ватă гвардийĕпе» сыв пуллашас килмест – вĕсем перекетлĕрех...» – пăшăрханать Сергей Александрович.

Компани газобаллон оборудованийĕ вырнаçтармалли пулăшу ĕçĕсем те кӳрет те – пушшех кӳренмелле. Малтан хăйĕн автомобилĕсене газ çине куçарнă, опыт пухнă май, оборудовани тата специалистсем пуррине кура паян кăткăс саккассене те пысăк пахалăхпа пурнăçлаççĕ, карбюраторлă двигательсене кăна мар, инжектор системисене те «сенкер топливо» çине куçараççĕ. Хамăр çĕршывра туса кăларнă машинăсенне те, иномаркăсенне те. Автомобильсене çумалли хăватлă комплекс пирки те çавнах каламалла. Чи малтанах вăл компание хăйне кирлĕ – «АККОНД» брендлă машинăсем тап-таса пулччăр. Анчах çăмăл машинăсен «душĕсем» кашни кĕтесре, пысăк фурăсене йышăнаканнисем сайра. Пулăшу ĕçĕ кирлĕ, апла тăк мĕншĕн унран та хушма тупăш илес мар?

Çĕнĕ шиномонтаж оборудованийĕ туяннă – ятарлă цех. «Пире шанма пулать, – терĕ хаçатăн унта пулнă корреспондентне пысăк опытлă слесарь Вячеслав Михайлов. – Пĕтĕм автопарка кирлĕ пек пăхса тăратпăр – çăмăл машинăсенчен пуçласа пысăк фурăсем таран». Юсавпа ТО пулăшу ĕçĕсене те кӳреççĕ, талăкĕпех ĕçлекен хураллакан автостоянка пур. «Тĕп тупăша груз турттарнинчен илетпĕр, – тет компанин тĕп бухгалтерĕ Светлана Антонова, – анчах вак пулăшу ĕçĕсенчен те ютшăнмастпăр – пус тенке упрать теççĕ вĕт».

Ĕçе кура – хисеп

Тăрăшса ĕçлени лайăх çимĕç кӳрет. Яваплăха туйса, пĕлсе вăй хунин кăтартăвĕ – компанин, унăн пысăк коллективĕпе ертӳçисен ĕçне пысăк шайра хаклани. Çак кунсенче Мускавран хыпар çитнĕ: РФ патшалăхăн статистика органĕсен официаллă отчечĕсен кăтартăвĕсем тăрăх «АККОНД-ТРАНС» АХО «Автохуçалăх ĕç-хĕлĕ» номинацире Раççейри предприятисен патшалăхăн пĕтĕмĕшле рейтингĕнче 9-мĕш вырăн йышăннă. Жюри предприятисене нумай кăтартупа хаклană – аварисĕр ĕçленинчен пуçласа финанспа хуçалăх ĕç-хĕлĕ таранах. Çĕр-шыври чи пысăк транспорт компанийĕсен хушшинче лидерсен шутне кĕни – пысăк çитĕнӳ.

Ку çеç те мар. Компани çавăн пекех РФ Патшалăх Думин Экономика политикипе предпринимательлĕх енĕпе ĕçлекен комитечĕ пуçарнипе 2008 çулта туса хунă Пĕтĕм тĕнчери çулленхи «Наци экономикин элити 2013» преми лауреачĕ пулса тăнă. Çакăн çинчен премин йĕркелӳ комитечĕ РФ Президенчĕн Ĕçсен управленийĕн «Президент-Отель» комплексĕнче лауреатсене наградăлама йĕркелекен уява чĕнсе янă йыхравра пĕлтернĕ. Саламлатпăр!

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Чăваш Республикин САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПУРНЕ ТЕ ТИВĔÇЛĔ МЕДИЦИНА СТРАХОВАНИЙĔН ТЕРРИТОРИ ФОНЧĔН 2013 ÇУЛХИ ТАТА ПЛАНПА ПĂХНĂ 2014 ТАТА 2015 ÇУЛСЕНЧИ ТАПХĂРТИ БЮДЖЕЧĔ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2013 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2013 çулхи тата планпа пăхнă 2014 тата 2015 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен" 2012 çулхи раштав уйăхĕн 4-мĕшĕнчи 79 №-лĕ саккунне /"Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 7-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 2, 7 №-сем; "Республика" хаçат, 2013, чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕ/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 1 статьян 1-мĕш пайĕнче:

1-мĕш пунктра "9216946,3 пин тенкĕ" сăмахсене "9206446,3 пин тенкĕ" сăмахсемпе улăштарас, "7803391,9 пин тенкĕ" сăмахсене "7792891,9 пин тенкĕ" сăмахсемпе улăштарас;

2-мĕш пунктра "9253546,2 пин тенкĕ" сăмахсене "9243046,2 пин тенкĕ" сăмахсемпе улăштарас;

2/ 3 статьян 1-мĕш пайĕнче "3-3^2-мĕш хушса çырнисемпе" сăмахсене "3-3^3-мĕш хушса çырнисемпе" сăмахсемпе улăштарас;

3/ 4 статьян 1-мĕш пайĕн 1-мĕш пунктĕнче "5-5^2-мĕш хушса çырнисемпе" сăмахсене "5-5^3-мĕш хушса çырнисемпе" сăмахсемпе улăштарас;

4/ çакăн пек çырса 3^3-мĕш хушса çырни хушса хурас:

"Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2013 çулхи тата планпа пăхнă 2014 тата 2015 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен" саккунĕ çумне 3^3-мĕш хушса çырни

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2013 çулхи тата планпа пăхнă 2014 тата 2015 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен" саккунĕ çумне 3–3^2-мĕш хушса çырнисенче пăхса хăварнă Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн бюджечĕн бюджет укçи-тенкине 2013 çул валли бюджетсен тăкакĕсен классификацийĕн пайĕсемпе çум пăхăнакан, тĕллевлĕ статйисем тата тăкакĕсен тĕсĕсем тăрăх

ПАЙЛАСА ПАНИНЕ УЛĂШТАРАССИ

(пин тенкĕ)

Ячĕ	Мин	Пай	ÇП	ТТС	ТТ	Укçа-тенкĕ, çӳсни, чакни (-)
1	2	3	4	5	6	7
Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсем	395					-10500,0
Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен тата муниципалитет пĕрлĕхĕсен бюджечĕсене пĕтĕмĕшле уйăракан бюджетсем хушшинчи трансфертсем	395	14	00			-10500,0
Пĕтĕмĕшле уйăракан бюджетсем хушшинчи ытти трансфертсем	395	14	03			-10500,0
Федерацин "Раççей Федерацийĕнче пурнăç тĕ тивĕçлĕ медицина страхованийĕ çинчен" 2010 çулхи чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 326-ФЗ №-лĕ саккунĕ	395	14	03	505 1700		-10500,0
Медицина ĕçченĕсене пĕр хутчен паракан саплаштару укçине тӳлеме	395	14	03	505 1703		-10500,0
Бюджетсем хушшинчи трансфертсем	395	14	03	505 1703	500	-10500,0
Бюджетсем хушшинчи ытти трансфертсем	395	14	03	505 1703	540	-10500,0";

5) çакăн пек çырса 5^3-мĕш хушса çырни хушса хурас:

"Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2013 çулхи тата планпа пăхнă 2014 тата 2015 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен" саккунĕ çумне 5^3-мĕш хушса çырни

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2013 çулхи тата планпа пăхнă 2014 тата 2015 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен" саккунĕ çумне 5–5^2-мĕш хушса çырнисенче пăхса хăварнă Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федерацин фончĕн бюджетĕнчен, Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен уйăрса паракан бюджетсем хушшинчи трансфертсене 2013 çул валли

ПАЙЛАСА ПАНИНЕ УЛĂШТАРАССИ

(пин тенкĕ)

Бюджетсем хушшинчи трансфертсен ячĕ	Укçа-тенкĕ калăпăшĕ, çӳсни, чакни (-)
Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федерацин фончĕн бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсем – пĕтĕмпе	-10500,0
çав шутра çак ĕçсем валли:	
медицина ĕçченĕсене пĕр хутчен паракан саплаштару укçине тӳлеме	-10500,0
Пĕтĕмпе	-10500,0".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2013, раштав, 24, 92 №.

Ырă пуçару

Усал йăлапа пĕрле кĕрешесчĕ

"Ӳсĕр пурнăç – çур пурнăç", – теççĕ. Чăн та, эрех ĕçни çемьене салатать, обществăри йĕркелĕхе тĕп тăвать, пĕр-пĕринпе вăрçтарать. Симĕс çĕлен тĕреклĕ çынна ураран ӳкерет, ăна пулах çамрăксен кун-çулĕ вăхăтсăр татăлать, хĕрарăмсем те унăн аллине çаклаççĕ.

Сиенлĕ çак йăлапа кĕрешес тĕллевпе Чăваш наци конгресĕпе Куславкка район администрацийĕ тата республикăри наркологи диспансерĕ "Хăвна эрех ĕçничен çăл" проект пуçарнă. Унпа килĕшӳллĕн психологсемпе врачсем ял халăхĕпе тĕл пулса калаçаççĕ, вĕсене эрех сиенĕ пирки ăнлантарса параççĕ, сиплев мелĕсемпе паллаштараççĕ. Пĕрремĕш тĕл пулу Куснарта иртнĕ, çак кунсенче вара ушкăн Энтри Пасар ялĕнче пулчĕ.

Проект йĕркелӳçине, Чăваш наци конгресĕн физкультура, спорт, сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану енĕпе ĕçлекен комитечĕн ертӳçине Юрий Зорина çак ыйту уйрăмах хумхантарать. "Эрех ĕçме пысăк сăлтав кирлĕ мар: иккĕн тĕл пулчĕç – ĕçмелле, çĕнĕ япала туяннă – "çумалла"... Çак йĕркене пирĕн паянах тĕп тумалла, унсăрăн мĕн патне пырса тухăпăр. Çавăнпа пурин те – вĕрентекенсен, ял халăхĕн, администрацисемпе культура учрежденийĕсенче ĕçлекенсен – пĕрле кĕрешмелле, никамăн та айккинче юлма юрамасть. Унсăрăн ачасемпе çамрăксемшĕн пуласлăх çук, вĕсем аслисенчен тĕслĕх илеççĕ-çке. Аншарли юхтарса сутакан нумайланчĕ, спиртлă тĕрлĕ шĕвеке те кашни кĕтесрех туянма пулать – çак киревсĕрлĕхе те тĕп тумалла. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче çак ыйтăва та çĕкленĕ, общественăна сиенлĕ йăлапа кĕрешме чĕнсе калана. Чăн та, патшалăх халăх сывă пурнăç йĕркине пăхăнтăр тата спортпа туслашăр тесе чылай ĕç тăвать. Тĕслĕхрен: кашни районта физкультурăпа спорт керменĕ çĕкленчĕ, çавăнпа пушă вăхăта кĕрекере мар, спортзалта ирттермелле", – сĕнчĕ Юрий Александрович ентешĕсене.

Куславкка район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Марина Солдатихина каланă тăрăх – районта çакнашкал проект пулман. "Библиотекăсемпе шкулсенче ачасем валли мероприятисем йĕркелеççĕ, районти тухтăрсемпе тĕл пулу ирттереççĕ. "Çамрăксем сывă пурнăç йĕркишĕн" акци йăлана кĕнĕ. ЧНК пуçарнă проект вара пĕтĕм çын валли, унăн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Хальхи вăхăтра вăл ял тăрăхĕсен центрĕсенче пурнăçланать, малашне кашни яла çитме палăртнă", – пĕлтерчĕ Марина Сергеевна.

Республикăри наркологи диспансерĕн реабилитаци уйрăмĕн пуçлăхĕ Алевтина Андреева хăйсен ĕç-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Ĕçкĕçсемпе кĕрешесси совет тапхăрĕнчех пуçланнă, пирĕн республикăра наркологи больницине 1885 çулта уçнă. Хальхи вăхăтра унта çынсене пирус туртнинчен, наркоманирен, эрех ĕçнинчен сиплеççĕ. Реабилитаци уйрăмĕнче чирлекенсене психологи мелĕсемпе сывлатаççĕ. Пациентсене реабилитацилес енĕпе арçынсемпе хĕрарăмсем, ватăсемпе çамрăксем валли ятарлă клубсем ĕçлеççĕ. "Эрех ĕçни вăл – чир, çавăнпа ăна сиплемелле. Паллах, ĕçке ернĕ çыншăн ку чир мар, çавăнпа вăл больницăна кайма шухăшламасть. Кун пек чухне унпа хире-хирĕç ларса калаçмалла, аслисен тата ялти хисеплĕ çынсен сăмахĕ те витĕмлĕ. Пирĕн патăмăрта чирлисене кăна мар, вĕсен тăванĕсене те чылай чухне пулăшу кирлĕ. Вĕсем валли диспансерта ятарлă ушкăн ĕçлет", – терĕ тухтăр.

Алевтина Петровнăн сăмахне малалла тăсса наркологи диспансерĕн медицина психологĕ Венера Кондратьева çапларах каларĕ: "Сипленме çăмăл, урă пурăнма вара çав тери йывăр. Çавăнпа çемьери кашни çыннăн улшăнмалла, ĕçекенпе е ĕçме пăрахаканпа тимлĕрех пулмалла. Кашни уяв кĕрекинче эрех "хуçаланать", хаяррине тутанмасăр савăнма çук-им – тăванăр сывалтăр тесен çак йăларан хăтăлма тивĕ. Ӳсĕр çынпа вăрçнисапăçни усăсăр, хăвăр чунăра суранлатни кăна. Сирĕн урăх çул суйласа илмелле: çумаçумăн ларса сăмахлани питĕ пĕлтерĕшлĕ, ĕçнин сăлтавне пĕлме тăрăшăр, май килмесен больницăна çитме васкăр".

Чăн та, ырă та лайăх сĕнӳсем. Вĕсем ял çыннин чун-чĕрине вырнаçасса шанас килет. Илтмĕш туса алă сулас марччĕ кăна.

■ **Андрей ПЕТРОВ**

Йыша анлăлатнă

ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствине пăхăнса тăракан патшалăх учрежденийĕн е патшалăх унитари предприятийĕн ертӳçин вакантлă должноçне йышăнас текенсен конкурсне ирттерекен конкурс комиссине анлăлатнă. Чи малтанах, ирĕклĕ экспертсене явăçтарнине пула.

Юлашки улшăнусемпе килĕшӳллĕн конкурс комиссийĕн йышне вĕренӳпе ăслăлăх сферинчи, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнчи ирĕклĕ экспертсемсĕр пуçне ЧР Общество палатин тата Пĕтĕм Раççейри "Халăх фрончĕ "Раççейшĕн" общество юхăмĕн Чăваш регион уйрăмĕн представителĕсене кĕртнĕ.

Çакна палăртатпăр: 2013 çулхи раштав уйăхĕнче ЧР "Чăваш Ен наци телерадиокомпанийĕ" АУ директорĕн вакантлă должноçне йышăнас текенсен конкурсне заявкăсем йышăнма чарăннă. Конкурс комиссийĕн ларăвне 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 10-мĕшĕнче ирттерме палăртаççĕ.

Çаклаттă!

Касаматра вĕçленнĕ çул çӳрев

Çак "ăнăçу джентльменĕ" Чăваш Ене çитиччен пин километр ытла хыçа хăварнă. Кунта вара… вăрăпа çаклаттă.

Çĕрле Шупашкарти Хуçалăх тăкăрлăкĕнчи база территорине Брянск номерĕллĕ пысăк фура çитсе чарăннă. Кунта вырнаçнă фирмăсенчен пĕрин валли пластик чӳречесене комплектламалли хатĕрсем тиесе килнĕ. Ватă хуралçă "Мерседеса" хапха уçса территорие кĕртнĕ те ыйхине малалла тăсма будкăна таврăннă. Водитель те кăштах тĕлĕрсе илес тенĕ – ирччен, груза пушатмалла пуличчен. Унăн çулташĕ вара, хистесе тенĕ пекех Брянскран пĕрле ларса тухнăскер /Шупашкара килсе курас килнĕ-мĕн/, çывăрса вăхăта сая ярас темен.

Хуралçă ыйха çапать – çакăнпа усă курса çамрăк çын база территорийĕнчи ют машинăсен салонĕсене ухтарма пуçланă. Пĕр машина чӳречине çапса ватнă, теприн кантăкне... Ĕçчен "турист" никам та чарманнине кура çĕрле машинăсен алăкĕсене çапла майпа уçнă. "Ĕçлесе" ывăннă хыççăн "трофейсене" хайхи Брянск грузовикĕн çывăрмалли пӳлмине пытарнă та хăй те унта кĕрсе выртнă – "халь тĕлĕрсе илме те юрать"...

Ирхине базăра шăв-шав çĕкленĕ: харăсах виçĕ автомашина водителĕсем салонсенчен тĕрлĕ техника çухалнипе хыпăнса ӳкнĕ – пĕтĕмпе 10 пине яхăн тенкĕлĕх. Хуралçăран ыйтаççĕ – вăл нимĕн те калаймасть, мĕн пулса иртнине ăнланмасть. Брянскран килнĕ "Мерседес" вара çак самантра грузне пушатма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ, çула тухма хатĕр. Анчах ют регион номерĕллĕ грузовик полицейскисене сисчĕвлентернĕ. Атя-ха, тĕрĕслер!

Вăрланă япаласене шăпах унта тупнă. Хуçисем вĕсене тӳрех палласа илнĕ. Халĕ ĕнтĕ Шупашкарăн çамрăк хăнин Чăваш Енĕн тĕп хулипе полицин ятарлă машинин решеткеллĕ чӳречинчен пăхса паллашма тивнĕ, ăна тӳрех следстви изоляторне ăсатнă.

2-мĕш ОП следстви пайĕн ертӳçи Анатолий Васильев пĕлтернĕ тăрăх – тытса чарнă çамрăкăн амăшĕ пакунлисем хăйне пăтăрмах пирки шăнкăравласа пĕлтерсен чутах макăрса яман, мĕн пулса иртнине ĕненмен: "Манăн ывăл апла хăтланма пултарайман!" Пултарнă çав: Брянск çамрăкĕ Шупашкара пин километр ытла килнĕ – судпа айăпланма... Ун пирки УК 150 статйипе /"вăрлани"/ уголовлă ĕç пуçарнă – 5 çуллăхах ирĕклĕхсĕр хăварма пултараççĕ. Полицейскисем база ертӳçи пирки те представлени çырнă – преступлени пулассине сăлтавлакан условисене пĕтермелли пирки асăрхаттарнă.

■ **Ольга ПАВЛОВА**

Хёр-упраçпа Ӑш-кёрём

Ятарлă кăларăм

Наркотикпе ан туслашчáр

Кăçал раштав уйăхĕн 5-мĕшĕнчен шкул ачисемпе студентсене наркотиксемпе айкашни-айкашманнине палăртакан тест витĕр кăлармалли пирки калакан саккун вăя кĕнĕ. Аса илтеретпĕр: çакнашкал тĕрĕслевсене икĕ çул сăнав шайĕнче çеç ирттернĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн – тестсене тата медтĕрĕслевсене халĕ пĕтĕм шкулта, колледжсемпе техникумсенче, аслă шкулсенче йĕркелемелле. Ун витĕр тухма килĕшни пирки 15 çултан аслăраххисен хăйсен пĕлтермелле, ку ӳсĕмрен кĕçĕнреххисемшĕн вара ашшĕ-амăшĕн йышăну тума тивет. Тест икĕ тапхăртан тăрать. Пĕрремĕшĕ – социаллă тата психологи тапхăрĕ, унта çамрăка ятарлă анкета ыйтăвĕсене хуравлама сĕнеççĕ. Иккĕмĕшĕнче анализсем памалла пулать, вĕсем организмра наркотик хутăшĕсен витĕмĕ пурри-çуккине палăртма пулăшаççĕ. Çав хушăрах учительсем вĕренекенсенчен хăшĕсем теветкеллĕх ушкăнне лекнине пĕлмесĕрех юлĕç.

РФ Сывлăх сыхлавĕн министерствин тĕп психиатр-наркологĕ Евгений Брюн каланă тăрăх – шкулсенчи кашни вуннăмĕш ача наркотик тутине пĕлет. Институтсемпе университетсенчи студентсен 15-30% «шурă наркăмăша» пĕр хутчен те пулин ас тивсе курнă. Е.Брюн тест усă кӳрет тесе çирĕплетет: вĕренӳ заведенийĕсенче асăннă тĕрĕслеве иккĕмĕш хут ирттерсен унти çамрăксем наркотиксемпе кăсăкланасси темиçе хут чакни палăрнă иккен. Ыйтăм ирттернĕ чухне врач-нарколог ыйтусене хуравлама сĕннипе çеç çырлахмасть-çке, кашни ачапа тата çамрăкпа уйрăммăн ĕçлет. Ашшĕ-амăшĕ маларах усă курнă анкетăри ыйтусене ача ӳсĕмне кура кăшт урăхлатма сĕннĕ, РФ Сывлăх сыхлавĕн министерстви çак асăрхаттарăва шута илме шантарнă. Вĕренекен е студент наркотикпе айкашни сисĕнсен ăна специалист патне ярĕç, паллах, кун пирки никама та пĕлтермĕç.

■ **Изольда БЕЛОВА**

Пуçарулăх

«Чи пéлтерéшли çéнтерӳ мар, ырá éç туни»

Чăваш Енре доброволецсен юхăмĕ вăй илсех пырать. Хальхи вăхăтра республикăра 1,5 пин команда ĕçлет, вĕсенче 42 пин ытла волонтер /ку – Чăваш Енре пурăнакан хĕрсемпе яшсен 14,6%/. Район-хулари волонтерсем ял тăрăхĕсенчи пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсене йĕркеленĕ çĕре, донорлăх программисене тата ытти мероприятие хастар хутшăнаççĕ, çав шутра, паллах, конкурссене те. Акă раштав уйăхĕнче республикăн йăлана кĕнĕ конкурсне – «Чăваш Ен доброволецĕ – 2013» – пĕтĕмлетнĕ. Вăл икĕ тапхăрпа иртнĕ. Куçăн майпа иртнĕ тапхăрта конкурсантсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа кăтартнă, социаллă проекчĕпе паллаштарнă.

«Доброволецсем – планета валли» номинацире чĕр чунсене, тăван тавралăха хӳтĕлес тата синкер сиенĕсене пĕтерес ĕçе хастар хутшăннăшăн Раççей патшалăх социаллă университечĕн Шупашкарти филиалĕн студенчĕ, регионсен хушшинчи «ЭКА» общество экологи организацийĕн Чăваш регион уйрăмĕн ертӳçин çумĕ Станислав ТРОФИМОВ çĕнтернĕ. Вăлах тĕп парнене – гран-прие – тивĕçнĕ. Маттур яшпа, Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендиачĕпе /2012 çулшăн/ тĕл пулсан студент хатĕрленĕ социаллă проект, волонтер ĕçĕ-хĕлĕ тата ытти тавра калаçрăмăр.

– «Чăваш Ен доброволецĕ» конкурса эпĕ кăçал пĕрремĕш хут, «Хăвăн йывăçна ларт» проектпа, хутшăнтăм, – терĕ Станислав. – Асăннă акцие 2013 çулта эпир «ЭКА» организаципе икĕ хут йĕркелерĕмĕр: çу тата юпа уйăхĕсенче. Атăл леш енче – унта 2010 çулта вăрман пушарĕсем алхаснă – йывăç лартма палăртрăмăр. Акци ирттересси пирки Интернет урлă маларахах пĕлтертĕмĕр, хамăрăн юлташсене, пĕлĕшсене чĕнтĕмĕр. Вăрман пушарĕ мĕн тери пысăк сиен кӳнине, çакăншăн чылай чухне этем айăплине нумайăшĕ ăнланчĕ, çавна пулах çу уйăхĕнчи акцие 100 доброволец хутшăнма кăмăл турĕ. Эпир ун чухне пĕтĕмпе 25 пин йывăç лартрăмăр. Юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче акци пуласси пирки те 10 кун маларах пĕлтертĕмĕр. Иккĕмĕш хутĕнче 200 çын килчĕ, пурте пĕрле 30 пин хыр лартрăмăр. Паллах, ытти чылай акцие те хутшăнтăмăр.

– «ЭКА» организаци пирки тĕплĕнрех пĕлес килет...

– «ЭКА» симĕс юхăм пирĕн республикăра 1,5 çул каялла йĕркеленчĕ. Ертӳçи – Александр Воробьев, эпĕ унăн çумĕ. Регионсен хушшинчи организацин уйрăмне хамăр республикăра туса хурас енĕпе нумай тăрăшрăмăр. Халĕ пирĕн юхăмăн кăсăклă программăсем, проектсем пур. Акă «Симĕс шкулсенех» илер. Унпа килĕшӳллĕн эпĕ юпа-чӳк уйăхĕсенче Шупашкар хулин Ленин районĕнчи пĕтĕм шкулта экоуроксем ирттертĕм. Вĕренекенсемпе йывăç та лартрăмăр. Ку ĕçе çуркунне малалла тăсăпăр. Унсăр пуçне эпир субботниксем йĕркелетпĕр. Чи пысăкки ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарти Бауман вăрманĕнче иртрĕ. Унта 830 çын хутшăнчĕ, пĕтĕмпе 700 ытла михĕ çӳп-çап, ăпăр-тапăр пуçтартăмăр. Атăл çыранĕсене тасатмашкăн 500 çын килчĕ.

Кăçал мана «Блогер çӳп-çапа хирĕç» тата «Тăватпăр!» акцисен координаторĕ пулма шанчĕç. Вĕсем – Пĕтĕм Раççей акцийĕсем, 220 хулара кăçалхипе виççĕмĕш хут иртрĕç. Маларахри çулсенче Шупашкарта Трактор тăвакансен культура керменĕ хыçĕнчи вăрмана тасатнă. 2013 çулта акцие анлăлатас терĕмĕр. Авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче «Гузовский ращи» паркĕнче, 14-мĕшĕнче харăсах икĕ çĕрте – маларах асăннă культура керменĕ çывăхĕнчи тата Бауман вăрманĕсенче субботник – ирттертĕмĕр. Ун чухне Етĕрнере, Красноармейскинче, Çĕнĕ Шупашкарта та çакнашкал акцисем йĕркеленĕ. Икĕ кунра пĕтĕмпе 1,5 пине яхăн çын хутшăнчĕ, 4 пин миххе яхăн ăпăр-тапăр пуçтартăмăр. Пĕтĕм Раççейри координаторсен конкурсĕнче эпĕ 2-мĕш вырăн йышăнтăм.

– Районсенче те субботниксем ирттеретĕр апла?

– Яллă вырăнсенче те ирттеретпĕр паллах. Кăçал эпир район-хулара «ЭКА» симĕс юхăмăн штабĕсене туса хутăмăр, хальлĕхе 8 çĕрте: Етĕрнере, Канашра, Красноармейскинче, Çĕмĕрлере, Куславккара, Патăрьелте, Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта. Эпир районсене тăтăшах тухса çӳретпĕр, симĕс юхăм пирки каласа кăтартатпăр. Штаб ертӳçисене сĕнӳ-канашпа пулăшатпăр. Вăхăт иртнĕçемĕн ытти район-хулара та «ЭКА» штабĕсене туса хурас тетпĕр.

– Нумаях пулмасть эсир кивĕ батарейкăсене пуçтарас енĕпе ятарлă акци йĕркеленине пĕлетĕп. Çак шухăш хăçан çуралчĕ?

– Тахçанах. Усă курнă батарейкăсене нумайăшĕ çӳп-çап витрине е урама кăларса пăрахать. Унти сиенлĕ япаласем вара тăван тавралăха, каярахпа çын сывлăхне япăх витĕм кӳреççĕ. Сăмахран, пĕр батарейка 400 литр шыва тата 20 тăваткал метр тăпрана сиенлĕ компонентсемпе варалать. Çакна шута илсех Шупашкарта 5 çĕрте, управляющи компанисен никĕсĕ çинче, усă курнă батарейкăсене пуçтараççĕ. Анчах кун пирки нумайăшĕ пĕлмест. «ЭКА» юхăмăн «Разряжайся» текен программа пур. Эпир раштав уйăхĕн 13-мĕшĕнче «Шупашкар» суту-илӳ центрĕ умĕнче усă курнă батарейкăсемпе кивĕ карас телефонĕсене йышăнтăмăр. Ун пирки те Интернет урлă пĕлтертĕмĕр. Хулара пурăнакансене меллĕрех пултăр тесе эпир çакнашкал акцие Шупашкарăн ытти районĕнче те йĕркелесшĕн. «ЭКА» организаци Челябинскри заводпа каласса татăлнă, вĕсем пирĕнтен кивĕ батарейкăсене тӳлевсĕрех йышăнма хатĕр. Сăмах май, районсенчи штабсем ку акцие хастар хутшăнаççĕ. Акă Етĕрнесемпе Канашсен 800-шер батарейка пуçтарăннă. Çĕмĕрлесен – 1800, вĕсем шкулсенче ятарлă ешчĕксем вырнаçтарнă. Етĕрнери 5 шкул пĕр-пĕрин хушшинче хăйне евĕрлĕ ăмăрту йĕркеленĕ: хăшĕ ытларах пухать? Ку енĕпе малалла та ĕçлĕпĕр.

– Станислав, эсĕ юридици факультетĕнче вĕренетĕн. Тăван тавралăх тасалăхĕпе илемĕшĕн нумай тăрăшатăн, апла тăк мĕншĕнха пурнăçна экологипе çыхăнтарас темерĕн?

– Юриспруденци мана яланах кăсăклантарнă, халĕ те интереслентерет. Экологи пирки калас тăк – вăл манăн чун туртăмĕ. «ЭКА» юхăмри хастарсен нумайăшĕн экологи енĕпе ятарлă пĕлӳ çук, çапах ку тăван тавралăхшăн тăрăшмашкăн пĕрре те кансĕрлемест. Пирĕнпе пĕр шухăшлисен йышĕ ӳссех пыни савăнтарать. 1,5 çулта эпир команда йĕркелеме пултартăмăр. «ЭКА» уйрăмĕ 45 регионта пур, малтанхи тапхăрта эпир рейтингра юлашки вырăнтаччĕ, çур çултан 23-мĕшне çитрĕмĕр. Кăçал çулла вара 2-мĕш вырăн йышăнтăмăр. Çакă – пирĕншĕн чи пысăк çитĕнӳ. 2013 çулта «Селигерта» пултăм, çамрăк экологсен форумне хутшăнтăм. Чăваш Енре иртекен «МолГород» форумра 2 çул ĕнтĕ энерги перекетлемелли тата экологи кунне, çавăн пекех курав йĕркелерĕмĕр. Экспертсем те килчĕç, çав шутра Раççейри «ЭКА» юхăмăн ертӳçи Марина Кокорина та пулчĕ. Кăтартусемпе кăмăллă эпир, мĕншĕн тесен çак мероприятисене çамрăксем йышлăн килсе курчĕç.

Волонтерсем, пĕлетĕр ĕнтĕ, тӳлевсĕрех ĕçлеççĕ. Вĕсемшĕн чи кирли – кăтарту. Акă çуннă вăрмана тасатма кайнине илер. Пушара пула çунса кăмрăкланнă йывăçсене, йĕритавра йăваланса выртакан ăпăр-тапăра курсан чун ыратать. Çав территорие тасатсан, тирпей-илем кĕртсен вăл куça илĕртме пуçлать, чĕрере вара савăнăç хуçаланма тытăнать: эсĕ ку ĕçе хăвăн аллупа тунă-çке.

– Маларах асăннă конкурс патне таврăнар-ха. Çакнашкал тупăшусем хăш енĕпе пулăшаççĕ?

– «Чăваш Ен доброволецĕ» конкурс унта хутшăнакансемшĕн тупăшу пек туйăнмасть, мĕншĕн тесен эпир пурте ырă ĕç тăватпăр. Маншăн çакнашкал конкурссем – хампа пĕр шухăшлисемпе тĕл пулмалли сăлтав, кăсăклă проектсемпе паллашмалли меслет. Çавăнпа чи пĕлтерĕшли çĕнтерӳ мар, ырă ĕç тăвасси.

– Волонтер пулнипе çеç çырлахмастăн-ха, ытти çĕре те ĕлкĕретĕн.

– Эпĕ Шупашкар хулин Калинин районĕнчи Çамрăксен правительствин членĕ. Кăçал тăван районта – Красноармейскинче – маттур хĕрсемпе яшсене пĕр çĕре пухса Çамрăксен правительстви туса хума май килчĕ. Трак енрех мана «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» «Çамрăк гвардийĕн» председателĕ пулма шанчĕç. Унсăр пуçне депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен палатине ертсе пыратăп, çавна май тăван тăрăхра час-часах пулатăп.

– Хăвна ăслăлăх ĕçĕ кăсăклантарнине те палăртрăн. Халĕ эсĕ 4-мĕш курсра вĕренетĕн. Диплом илсен Чăваш Енрех юлас тетĕн-и?

– Малашлăх пирки шухăшлатăп паллах. Диплом илсен аспирантурăна каяс ĕмĕт пур. Вĕренсе пĕтерсен хăшĕ-пĕри пек лайăх пурнăç шыраса Мускава та, Питĕре те çул тытас килмест. Эпĕ хамăн тăван района таврăнасшăн. «Ăçта çуралнă – çавăнтах кирлĕ пулнă», – теççĕ вĕт. Диплом илсен, карьера тусан çемье çавăрасшăн.

– Çамрăксене мĕн калас килет?

– Вĕсене те, аслăрах çултисене те тăван тавралăх, хамăр планета тĕлĕшпе явапларах пулма чĕнсе калас килет. Кунта пирĕн хамăрăн пурăнмалла-çке. Вăл – пирĕн чи пысăк пуянлăх, эппин, ăна упрамалла, унăн тăрăмне лайăхлатма ăнтăлмалла.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА каласнă**

Проектсем

Çамрáксене – патриот воспитанийé

«Çамрăксене патриот воспитанийĕ парассине тата доброволецсен юхăмне аталантарассине уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Чăваш Ен çамрăкĕсем Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич пуçарнă проектсене те хастар хутшăннă. Республика команди уйрăмах Сочи хулинче иртнĕ Пĕтĕм Раççейри спорт туризмĕн фестивалĕнче ăнăçлă ăмăртнă, унта пирĕн туристсем пĕрремĕш вырăн йышăннă. «Гвардеец» оборонăпа спорт лагерьне, çавăн пекех округри «Атăлçи Зарници» çарпа спорт вăййисене хутшăннă çамрăксем те Чăваш Ен чысне çӳллĕ шайра хӳтĕленĕ. РФ Оборона министерстви ирттерекен смотр-конкурсри пирĕн çĕнтерӳ çамрăксене воспитани парас ĕç тухăçлăхĕн ырă кăтартăвĕ пулса тăчĕ», – палăртрĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура.

Чăн та, Чăваш Енре çамрăк ăрăва патриот воспитанийĕ парас енĕпе чылай ĕçлеççĕ. Раççей Президенчĕ Владимир Путин 2012 çулхи юпа уйăхĕнче ятарлă Указа алă пуснăранпа ку ĕçе пушшех те вăйлатма тăрăшаççĕ. Ун чухне çĕр-шыв ертӳçи граждан обществи тата влаç органĕсен умне тĕллев лартнă: çамрăксене патриот воспитанийĕ парассине вăйлатмалла, йывăр лару-тăрăва лекнĕ хĕрсемпе каччăсене тулли те кăсăклă, тĕрлĕ пулăмпа пуян пурнăça явăçтармалла-хăнăхтармалла. Асăннă Указа пурнăçлас тата влаç органĕсем çак ыйтусемпе тата тăрăшарах ĕçлеччĕр тесе Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич округра обществăшăн пĕлтерĕшлĕ темиçе проект ирттерме йышăннă: оборонăпа спорт тата сывлăха çирĕплетекен «Гвардеец» лагерь, «Атăлçи Зарници» çарпа спорт вăййисем, çамрăксен «iВолга» форумĕ, «Ачалăх çăлтăрĕсем» конкурс... Çак проектсене чăваш хĕрĕсемпе каччисем те хастар хутшăннă.

Акă çамрăксен «iВолга» форумĕ кăçал çĕртме уйăхĕнче Самар облаçĕнче иртнĕ. Вăл Пĕтĕм Раççейри «Селигер» вĕренӳ форумĕн хатĕрленӳ тапхăрĕ пулса тăнă. Пысăк пĕлтерĕшлĕ çак мероприятие Чăваш Енрен 82 çын хутшăннă. Вĕсен проекчĕсенчен чи кăсăклисене хамăр республикăра йĕркеленĕ «çавра сĕтел» вăхăтĕнче сӳтсе явнă, ĕçсене мĕнле лайăхлатмалли пирки экспертсем – федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов, ЧР Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерствин тата аслă шкулсен ертӳлĕхĕ – усăллă сĕнӳканаш панă. Çамрăксем хăйсен идейисене пурнăça кĕртмелли кашни утăма тĕплĕн сăнланă, проекчĕсем валли мĕн чухлĕ укça кирлине шутланă. Çакăн хыççăн виçĕ ĕçе – А.Сергеевăн «Интернет-журналистика шкулĕ», О.Смирновăн «Хула университечĕ», К.Александровăн «Волонтерсен шкулĕ» – укça-тенкĕпе пулăшма йышăннă.

«Гвардеец» лагерьте Атăлçири 600 ытла ачапа çамрăк, çав шутран 40-шĕ Чăваш Енрен, пулса курнă. Унта хутшăннисен 75% – йывăр лару-тăрăва лекнисем, тăлăхсем, служба тивĕçне пурнăçланă чухне вилнĕ çар çыннисен ывăлĕсем, нумай ачаллă çемьери шăпăрлансем. Унсăр пуçне ку йышра пурнăçне çарпа çыхăнтарас текенсем, кадет класĕсенче вĕренекенсем пулнă. Аслă классенче ăс пухаканскерсем икĕ эрне çар условийĕсенче пурăннă: кашни ир плац тăрăх стройпа утнă, окопсем чавнă, хĕç-пăшалтан пеме тата автомата салатса пуçтарма хăнăхнă. Пĕрремĕш сменăра пулнă ентешĕмĕрсем пултарулăх фестивалĕнче 1-мĕш, çар хатĕрленĕвĕ енĕпе 2-мĕш вырăн йышăннă. Иккĕмĕш сменăра Чăваш Ен команди çар пĕтĕмĕшле хатĕрленĕвĕпе 2-мĕш, стройпа утса тата волейболла, футболла выляса 3-мĕш вырăна тухнă, пĕтĕмĕшле зачетра вара – 4-мĕш. Маттур! «Гвардеец» лагерьте пиçĕхнисемпе курса калаçма тӳр килнĕччĕ те – вĕсенчен нумайăшĕ хăйсен офицер пулас килнине пĕлтернĕччĕ. Паллах, унта туптанă ăсталăх вĕсене çарта çеç мар, ахаль пурнăçра та кирлĕ пулĕ.

«Атăлçи Зарници» çарпа спорт вăййисен округри финалĕнче Чăваш Ен чысне Патăрьел районĕнчи çамрăк армеецсем хӳтĕленĕ. Вĕсем çак ăмăртусене çу тăршшĕпех хатĕрленнĕ, ытларах – республикăри ДОСААФ никĕсĕ çинче. Тăрăшни сая кайман: Чăваш Ен команди йĕтрене инçете ывăтассипе тата пурнăç тивĕçтерĕвĕн хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсен ăмăртăвĕнче – 3-мĕш, ишес енĕпе /эстафета/ – 2-мĕш, пĕтĕмĕшле зачетра вара 4-мĕш вырăн йышăннă. Чăнласах та курăмлă çитĕнӳ-çке ку!

Çамрăксене патриот воспитанийĕ парас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе тата мĕн тума май килни республикăра пурăнакансене те шухăшлаттарать. Чи кирли – вĕсен шухăш-сĕнĕвне республика ертӳлĕхĕ те илтни, ырă пуçарусене хăвăртрах пурнăça кĕртмешкĕн майсем туса пани. Акă кăçал раштав уйăхĕн 6-мĕшĕнче республикăри Тинĕс-çар флочĕн ветеранĕсен союзĕн председателĕ Владимир Крюковский Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ирттерекен йышăнăва килсен республикăра кадетсен корпусĕ кирли пирки сăмах пуçарчĕ. Вăл çак корпуса Кӳкеçри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан ятарлă /коррекци/ интернат шкул никĕсĕ çинче туса хума сĕнчĕ. Михаил Игнатьев республикăра кадетсен корпусĕ кирлех тесе палăртрĕ, çапах, унăн шухăшĕпе, ку центра Шупашкарти кадетсен Совет Союзĕн Геройĕ А.В.Кочетов ячĕллĕ шкул никĕсĕ çинче йĕркелемелле. Чăваш Енре кадет класĕсен шутне ӳстермелле терĕ. Хальхи вăхăтра Чăваш Енри 13 район-хулара 52 кадет класĕ ĕçлет, вĕсенче 2300 ачапа çамрăк вĕренет. «Республикăри кадетсен корпусне туса хуни ачасемпе çамрăксене воспитани парас енĕпе комплекслă майпа тăвакан ĕçсен шутне малалла тăснин лайăх тĕслĕхĕ пулассăн туйăнать. ЧР Вĕренӳ министерствин çак ыйтăва татса парассипе çыхăннă сĕнӳсене 2014 çулăн пĕрремĕш çурринче тăратмалла», – терĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ çӳлерех асăннă Çырурах.

«Общество пĕрлĕхĕн никĕсĕнче патриотлăх çеç пулма пултарать», – пĕлтернĕ пĕр тĕл пулура Раççей Президенчĕ Владимир Путин. Эппин, çитĕнекен ăрăва патриот воспитанийĕ парас ĕçе çакăншăн явапла çынсем малашне те хастар хутшăнччăр, çамрăксем хăйсем Раççей гражданинĕсем пулнăшăн мăнаçланччăр тесе тăрăшчăр.

■ **Ирина СЕМЕНОВА**

Ыйту-хурав

Çырмалла-и е çук-и?

Çамрăк специалистăн ĕç кĕнекине вăл вырнаçакан учрежденире уçаççĕ. Унта çын вĕреннĕ – вăтам професси е аслă пĕлӳ илнĕ – тапхăр пирки çырмалла-и е çук-и?

Виктор А.

Ĕç кĕнекисене тултармалли тата упрамалли, вĕсен бланкĕсене хатĕрлемелли йĕркесемпе килĕшӳллĕн /вĕсене РФ Правительствин 2003 çулхи ака уйăхĕн 16-мĕшĕнчи 225 №-лĕ Постановленийĕпе çирĕплетнĕ/ ĕç кĕнекине çын, вăл пурнăçлакан ĕç, этем яланлăх урăх ĕçе куçни е пăрахса кайни, ăна ĕçри çитĕнӳсемшĕн панă наградăсем пирки калакан сведенисене, çавăн пекех ĕç килĕшĕвне татнин сăлтавĕсене çырса хураççĕ. Асăннă правилăсен 21 пунктне тĕпе хурса ĕç вырăнĕнче çын квалификацие ӳстерекен тата кадрсем хатĕрлекен ятарлă курссенче е шкулсенче вĕреннĕ вăхăт çинчен палăртаççĕ. Аслă шкулта е колледжра пĕлӳ пухни çинчен çырмаççĕ.

Хáçан памалла?

Çынна хăйĕн ирĕкĕпе ĕçрен кайнă чухне ĕç укçине тата ытти тӳлеве хăçан парса татмалла?

Анатолий В.
Канаш районĕ.

РФ Ĕçлев кодексĕн 140 статйипе килĕшӳллĕн ĕç килĕшĕвне татсан пуçлăхăн ĕçрен каякан çынна юлашки ĕç кунĕнче шалу тата ытти тӳлеве парса татмалла. Енчен те çын çав кун ĕçлемест тĕк ăна çав укçана тепĕр кунхине памалла.

УЭК пулáшáвéпе

Хăш транспортра çул çӳревшĕн универсал электрон карттă /УЭК/ пулăшăвĕпе тӳлеме юрать?

Вероника Р.
Шупашкар районĕ.

Чăваш Енре пурăнакансем кăçалхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа общество транспорчĕпе çӳренĕшĕн УЭК пулăшăвĕпе тӳлеме пултараççĕ. Çак меслетпе Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенчи троллейбуссенче тата "Чăвашавтотрансăн" пассажир транспортĕнче усă курма пулать. Общество транспортĕнче электрон мелпе тӳлекенсем пĕр тенкĕ перекетлеççĕ.

Кăларăма Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА хатĕрленĕ.

Кил-çурт хуçалăх

Усăллă канашсем

● Икерчĕ чусти ан çыпăçтăр тесен çатмана малтан тăварпа сăтăрмалла.

● Ыраш тата тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ çăкăра пĕрле хума юрамасть, капла вĕсем хăвăртах типеççĕ.

● Шарлотка ырă шăршăллă, тутлă пултăр тесен пĕçериччен пан улми çине лимон сĕткенĕ сирпĕтмелле.

● Сахăра ытти апат-çимĕçрен айккинерех упрамалла, мĕншĕн тесен вăл ют шăрша хăвăрт туртса илет.

● Ют çĕр-шывран кӳрсе килекен хулăн хупăллă улмасырлана – апельсина, лимона, ананаса тата ыттине те – вĕренĕ шывпа çумалла, вĕресе тăракан шывпа сирпĕтсе илмелле.

● Сире лимон сĕткенĕ темиçе тумлам çеç кирлĕ чухне ăна хулăн йĕппе е шĕвĕртнĕ шăрпăк пĕрчипе шăтармалла, кирлĕ чухлĕ юхтарса илмелле.

● Аш пĕçернĕ чухне 25-35% çухалать /шӳрпене куçать/. Ăшаланă чухне те çавах. Пăшăханă май çăвăн 4-8% çеç çухалать. Аша кун пек хатĕрлесен витаминсем, минералсем ытларах сыхланса юлаççĕ.

Вулакан сĕнет

Ĕне усракана пулăшма

Ĕне усракансене усăллă сĕнӳсем парас килет. Çак маç темрен те пулăшать: маститран, çуллахи вăхăтра пăван таврашĕ сыртасран. Ĕне çиллине 1-2 кун сĕрсен веçех иртет. Çак маçпа эпĕ кашни кунах ĕне сума пуçличчен усă куратăп.

Маç рецепчĕ: 1 литр ӳсен-тăран çăвне тата пыл хурчĕн 100 грамм ăвăсне /воск/ шыв мунчинче ирĕлтермелле, кĕленче савăта ярса хумалла.

А.КОМИССАРОВА.

Тĕпелте чухне

Пан улмирен хатĕрлетпĕр

Печени

2 пан улми, 200 грамм финик, 100 грамм услам çу, 4-шар апат кашăкĕ сахăр песукĕ, пыл, 1-ер стакан çăнăх, сĕлĕ хăрпăкĕ, 1 пакет разрыхлитель, 1 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ, аçтăрхан мăйăрĕн 16 çурри кирлĕ.

Финик вăррисене кăлармалла, çимĕçе турамалла. Пан улмине çумалла, 4 пая пайламалла, вăррине кăларса шултра теркăпа хырмалла.

Кастрюльте услам çу ирĕлтермелле, сахăрпа пыл хушмалла, сахăр ирĕличчен лайăх пăтратмалла. Финик ямалла, вăйсăр çулăм çинче 4 минут пăшăхламалла. Çăнăх, сĕлĕ хăрпăкĕ, разрыхлитель, пан улми, лимон сĕткенĕ хушмалла. Пăтратмалла. Духовкăна 190 градуса çити вĕрилентермелле. Çатма е противень çине пергамент сармалла. Хутăша сарса вырнаçтармалла, тикĕслемелле. Аçтăрхан мăйăрĕпе илемлетмелле. Çур сехет пĕçермелле, ун хыççăн духовка температурине 160 градуса çити чакармалла, тата 10 минут пĕçермелле.

Пылпа, мăйăрпа

2 пан улми, 1 апат кашăкĕ пыл, 20 грамм вĕтетнĕ мăйăр, 50 грамм иçĕм, 5 грамм корица, 30 грамм хĕрлĕ хурлăхан, соус валли 250 грамм хăймаллă сĕт, 2 çăмарта сарри, ваниль сахăрĕ çур пакет, 50 грамм сахăр кирлĕ.

Пан улмине çумалла, типĕтмелле, тăррисене касса шăтăк тумалла.

Иçĕме темиçе хутчен те çумалла. Мăйăра вĕтетмелле. Хĕрлĕ хурлăхана /хĕллехи вăхăтра компотри сырлапа та, шăнтнипе те усă курма пулать/ иçĕмпе, мăйăрпа хутăштармалла, корица сапмалла, пан улми ăшне вырнаçтармалла.

Пан улмисене противене хумалла, пыл сĕрсе тухмалла, 220 градуса çити вĕрилентернĕ духовкăна хумалла, 20 минут пĕçермелле.

Соус хатĕрлемелле: хăймаллă сĕте /сливки/ вĕрилентермелле, çăмарта сарри, сахăр, ваниль сахăрĕ хушса кăштах çăраличчен пĕçермелле, пĕрмаях пăтратмалла.

Духовкăра пĕçернĕ пан улми çине çак соуса сапмалла.

Торт

Кирлĕ: чуста валли – 3 çăмарта, 100 грамм сахăр, 150 грамм услам çу, 250 грамм çăнăх, 30 грамм сĕт, 50 грамм вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрĕ, 1 пан улми, 15 грамм разрыхлитель, 2 апат кашăкĕ мăкăнь, 3 грамм корица, 30 грамм услам çу, 50 грамм вĕтетнĕ сухари, илемлетме – пысăк 2 пан улми, 30 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, 2 апат кашăкĕ пыл.

Услам çупа сахăр песукне шап-шурă хутăш пуличчен пăтратмалла. Çăмартана кăпăшлантармалла, маларах хатĕрленĕ хутăша ямалла, ăшă сĕт хушмалла.

Пĕр пан улмине тăваткалласа турамалла, çу, çăмарта, сĕт хутăшне ямалла, çакăнтах вĕтетнĕ мăйăр сапмалла.

Разрыхлитель, мăкăньпе, корицăпа хутăштарнă çăнăх ямалла, чуста çăрмалла.

Чустана çу сĕрнĕ, сухари сапнă ятарлă çатмана е противене вырнаçтармалла. Пан улмине çӳхе касăксем туса касмалла, веер пек илемлĕн хурса тухмалла. 180 градуса çити вĕрилентернĕ духовкăна лартса 25 минут пĕçермелле. Пиçнĕ хыççăн кăштах сивĕнсен торта сарлака хитре турилкке çине хумалла, аçтăрхан мăйăрĕпе илемлетмелле, пыл кăштах сапмалла.

Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.

Ас тăвăм

Авиаци полкĕн командирĕ

Пĕр ĕмĕр каялла, 1913 çулхи чӳк уйăхĕн 13-мĕшĕнче, Етĕрне уесĕнчи /халĕ – Муркаш районĕ/ Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче çуралнă Борис Васильев ентешĕмĕрсенчен чи малтанхисен йышĕнче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ. Борис Михайлович – истребитель, авиаци полкĕн командирĕ.

Çăмăл килмен унăн пурнăçĕ. Виçĕ çулта чухне хăр тăлăха юлнă. Юрать-ха тăванĕсем пăрахман. Аккăшĕ Екатерина Васильевна унăн тăван амăшĕ вырăнĕнчех пулнă. Выçлăх, йывăр çулсенче çичĕ çулти ача Етĕрнери ача-пăча çуртĕнче хӳтлĕх тупать. Темле йывăрлăх чăтма тивсен те Етĕрнери сакăр класлă шкултан ăнăçлă вĕренсе тухать. 18 çула пуссан ялти пуçламăш шкул ертӳçине çирĕплетеççĕ. Пĕр вăхăтрах колхозри ревизи комиссийĕн председателĕнче тата комсомол ячейкин секретарĕнче тăрăшать.

Б.Васильев 1935 çулта Хусанти авиаци институтне вĕренме кĕрет. Осоавиахим аэроклубĕнче самолетпа вĕçме хатĕрленет. Виçĕ курс пĕтернĕ çамрăка Хĕрлĕ Çара илеççĕ, Борисоглебскри çар летчикĕсем хатĕрлекен шкула ăсатаççĕ. Унтан та ăнăçлă вĕренсе тухать ентеш. 1941 çул пуçламăшĕнче Качинскри çар авиаци шкулĕн комиссар-летчиксен курсне вĕçлет.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче – 1941 çулхи авăн уйăхĕнченпе. Кăнтăр, Кăнтăр-Хĕвел анăç, Сталинград, Пĕрремĕш Белорусси фрончĕсенче çапăçать. Паттăрлăхпа хăюлăхшăн СССР Аслă Канашĕн Президиумĕн 1941 çулхи чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнчи указĕпе ăна Совет Союзĕн Геройĕн ятне параççĕ, Ленин орденĕпе тата «Ылтăн Çăлтăр» медальпе /643-мĕш номер/ наградăласçĕ.

Б.Васильевăн награда хутĕнчен: «...1941 çулхи авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче Васильев ертсе пыракан звено Днепр урлă хывнă каçă çывăхĕнчи бензин складне икĕ бомбăпа тĕп тунă. Тăшман вăйлă персе тăнипе самолет ултă çĕртен шăтнă. Апла пулин те Васильев хамăр аэродрома вĕçсе çитсе самолета ăнăçлă антарса лартма пултарнă...

Авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче нимĕç фашисчĕсен переправи çине бомбăсем пăрахса ăна юрăхсăра кăларнă...

Авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче Б.Васильев эскадрильăна Верховцы станци çывăхĕнчи аэродром çине бомба пăрахма ертсе кайнă. Тăшманăн 7 самолетне тĕп тунă...

Авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче Ломовка çывăхĕнчи переправăна аркатма вĕçсе тухсан тăшман зениткисем Б.Васильев самолечĕн бакне персе шăтараççĕ. Летчик çухалса каймасть, самолета хамăр территорие илсе çитерсе антарса лартма пултарать...»

Награда хучĕ çинче «Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçлĕ» тесе хушса çырни пур. Аялрах – 6-мĕш арми командующийĕ Малиновский генералпа Кăнтăр-хĕвел анăç фрончĕн командующийĕ Тимошенко алă пуснисем.

Хĕрлĕ Çăрăн кадрсен тĕп управленийĕн 4-мĕш пайĕ ВКП/б/ Чăваш обкомĕн секретарĕ И.Чарыков ячĕпе 1942 çулхи юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче янă çырура Герой пирки çапла çырнă йĕркесене вулатăр: «...Нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса паттăрлăх кăтартнăшăн СССР орден-медалĕпе наградăланисен йышĕнче 864 чăваш пур. Вĕсенчен пĕри – Совет Союзĕн Геройĕ, батальон комиссарĕ Борис Михайлович Васильев, Хĕвел анăç фрончĕн истребительсен авиаполкĕн çар комиссарĕ...»

1942 çулхи çулла 92-мĕш истребительсен авиаци полкĕ Сталинград тӳпинче тăшманпа çапăçать. Пĕр тытăçура Борис Васильев тусĕ, полк командирĕ Фарид Фаткуллин вилет. Б.Васильева ун вырăнне полк командирне çирĕплетеççĕ. Кĕçех вăл та йывăр аманать. Госпитальсенче сипленнĕ хыççăн Борис Михайлович каллех фронтра.

Чăваш Енре Геройпа тивĕçлипе мăнаçланнă. ВКП/б/ Чăваш обкомĕ Хĕрлĕ Çăрăн сывлăш-çар штабне 1944 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче янă телеграммăра ентешĕсем Борис Васильев валли ятарласа самолет туянни çинчен пĕлтернĕ.

Б.Васильев Çĕнтерĕве хăйĕн полкĕпе Берлин çывăхĕнче кĕтсе илнĕ. Унăн кăкăрне I тата II степень «Тăван çĕр-шыв вăрçи» орденсем илемлетнĕ.

1951 çулта Сывлăш-çар академийĕнчен вĕренсе тухнă, 1953 çултанпа – саппасри подполковник. Шел, Герой пурнăçĕ 1955 çулта сарăмсăр татăлать.

■ **Мария БЕЛКОВА,**
Чăваш Республикин хальхи историйĕн патшалăх архивĕн аслă архивисчĕ

Çĕр

Çаплах асапланать

Çĕр ыйтăвĕ çивĕчлĕхне çухатмасть-ха. Калăпăр, виççĕмĕш ача çуратнисем хăйсене меллĕ вырăнта лаптăк илесшĕн. Ял çыннисем пай çĕрсене харпăрлăха куçарассишĕн тăрмашаççĕ. Ку ĕçсене, паллах, çийĕнчех пурнăçламалла. Çав вăхăтрах пулăхлă тăпрапа тухăçлă усă курасси пирки те манмалла мар. «Пахча çимĕçе пуçтарса кĕнĕ вĕт», – тейĕ хăшĕ-пĕри. Анчах ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ пур лаптăкпа та тĕллевлĕн усă курманни çаплах калаçтарать.

Ял сăнне яракан ӳкерчĕксем

Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн инспекторĕсем, сăмахран, 9 уйăхра кăна ял тăрăхĕсен администрацийĕсене тĕрĕсленĕ май 24 çӳп-çап купи тупса палăртнă. 2,0 гектара шар кăтартнăшăн 22 ял тăрăхĕн пуçлăхне 51 пин тенкĕлĕх штрафланă. Çав шутра Патăрьел тата Хĕрлĕ Чутай районĕсен прокуратурисен постановленийĕсемпе те. Кăçал управлени ĕçченĕсем Çĕмĕрле, Етĕрне, Улатăр, Вăрнар, Комсомольски, Патăрьел, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Элĕк, Шупашкар, Муркаш, Шăмăршă районĕсенчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене административлă майпа айăпланă.

Çитменнине пур çĕрте те инспекторсен асăрхаттарăвĕсене пурнăçласшăнах мар. Сăмахран, Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкас Кĕçтемĕр ял тăрăхĕн пуçлăхне тавралăх сăнне яракан вырăна тасатмалли тата унти çĕре усă курмалла юрăхлатмалли çинчен калакан предписание вăхăтра пурнăçламаншăн РФ КоАП-ĕн 19.5 статйин 1 пайĕпе административлă майпа айăплама тивнĕ. Çӳп-çап купине çавçавах пĕтермелле.

Комсомольски районĕнчи пĕр обществăна ку енĕпе йĕркене пăснăшăн 2 хут штрафланă. Иккĕмĕш хутĕнче вăл Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Акчикасси ял тăрăхĕнче хăйăр кăларнă май пулăхлă çĕрех тăмпа, йывăç-тунката юлашкийĕсемпе, туратсемпе витсе хунă. 2012 çулта вара çакнашкал пулăмшăн ăна 10 пин тенкĕлĕх штрафланăччĕ.

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç ял тăрăхĕнче темиçе çĕрте илемсĕрлĕх хуçаланнă. Пĕр çĕрте кантăк ямаласем, тимĕр тата пластик изделисен юлашкийĕсем тата ытти япала йăваланнă. Тепĕр тĕлте мунча лартнă хыççăн тăрса юлнă йывăç татăкĕсем.

Тĕрĕссипе, кунашкал хитре мар ӳкерчĕк кашни районтах пур.

Акă Патăрьел районне илер. Çак тăрăхра йăлари хытă каяшсене пăрахма ятарлă вырăн уçнă. Ăна «Полигон» общество пăхса тăрать. Тăпра пулăхне ӳстерме пĕлтĕр 11 хуçалăхра извеç сапнă, 10-ĕшĕнче – кали. Кусем ырă сăмаха тивĕçлĕ ĕç темелле. Анчах ăпăр-тапăр куписенчен кунта та хăтăлса пĕтеймеççĕ-ха. Кăçал управлени инспекторĕсем Ксыл Чишма ял тăрăхĕн пуçлăхне кунашкал йĕркесĕрлĕхшĕн 2 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Çĕре 3 çуллăха – арендăна

Инспекторсем планпа килĕшӳллĕн тĕрĕслевсем ирттернĕ май кунашкал кăлтăксемпе кăна мар тĕл пулаççĕ. Пур районта та тенĕ пекех аренда килĕшĕвĕсенчи хăшпĕр самант тивĕçтермен. Çĕре хăшĕ-пĕри 1 çуллăха е сахалрах вăхăта тара илет. Çакă – Чăваш Республикин «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен çаврăнăшĕ çинчен» саккуна тӳрремĕнех пăсни. Унта аренда килĕшĕвĕсене сахалтан та 3 çуллăха тумаллине палăртнă.

Паллах, саккунра йышăннă тапхăртан сахалрах вăхăта тунă килĕшĕве регистрацилес хуйхă çук. Анчах та пĕр çул хушшинче çĕртен пайта илме кăна пулать вĕт. Лаптăка им-çампа апатлантарас тесе никам та тăрăшмасси паллă. 3 çула илекенни лайăх тухăçшăн малтан тăпран пулăхлăхне вăйлатать, çапла-и? Кунашкал тĕслĕхсем пирки Чăваш Республикин прокуратурине тата Росреестрăн республикăри управленине пĕлтернĕ.

Вырăнтисем ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене тĕрĕслемеççĕ

Муниципалитетсем çĕр тĕрĕслевĕ ирттересси пирки те асăнса хăварас килет. Управлени ĕçченĕсем çирĕплетнĕ тăрăх – ял тăрăхĕсен администрацийĕсенче саккунсемпе килĕшӳллĕн çакăн çинчен калакан Положение тата Административлă регламента çирĕплетнĕ. Анчах та тĕрĕслев ирттермелли плана инспекторсем пулнă ял тăрăхĕсен 50 проценчĕ çеç прокуратурăна кăтартса çирĕплетнĕ.

Россельхознадзор специалисчĕсем палăртнă тăрăх – вырăнта ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене тĕрĕслемеççĕ тесен те юрать. Муниципалитетсем ытларах ялсенчи çĕрсен тĕлĕшпе тимлĕ.

Çакна та палăртмалла: район администрацийĕсемпе тунă килĕшĕве тĕпе хурса вĕсенчен управление Çĕр саккунĕсене пăсни çинчен 24 сыру-пĕлтерӳ çитнĕ. Кашнин тĕлĕшпе контрольпе надзор мероприятийĕ йĕркеленĕ. Чăнах та иккен: сыру-пĕлтерӳсем ахальтен çуралман. Çĕршĕн тăрăшманшăн юридици сăпатĕнчи – 4, должноçри – 1, ахаль 62 çынна административлă майпа явап тыттарнă.

■ **Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
управлени ĕçченĕ

Тĕрĕслев

Шыва вараланă

Чылай район-хулари коммуналлă хуçалăхсен биологи тасату хатĕрĕ юрăхсăра тухнă пирки нумай хутлă çуртсенчен пуçтарăнакан шĕвĕ каяша техникахими хатĕрĕсемпе усă курса тасатаймаççĕ.

Йӳçекенскере сиенсĕрлетмесĕрех тавралăха юхтарса кăлараççĕ. Тепĕр тĕслĕх – Шупашкар районĕнчи Ишлей ялĕнче. Мăшкăлтăк шывне "Уют" общество тасатмăшĕнчен малтан ял хушшине, унтан Ункă юхан шывне патшалăхăн тивĕçлĕ тытăмĕнчен ирĕк илмесĕрех чăмтарнă. Предприяти йӳçеккине юхтарса кăларма темшĕн документ ыйтман.

Сиенсĕрлетмĕше ĕçлеттерме тăрăшнине ырламалла кăна. Анчах çулла çынсем объект таврашĕнче, йӳçенкĕ юхнă вырăнта сывлăша шăршă-маршă йывăрлатнине сиснĕ. Паллах, вăл экологие те, санитари-эпидемиологи йĕркине те тивĕçтермен. Унка йӳçленкĕ чăмтарни административлă кодексăн шыв-шур объектне хӳтĕлеме ыйтакан статйипе килĕшсе тăмасть. "Уют" тавралăха сăтăрласа витĕм кӳнĕ пирки тӳснĕ тăкака палăртнă вăхăтра саплаштарса тăман. Çут çанталăка хӳтĕлекен Шупашкар прокуратури предприяти тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарнă, ăна пăхма суда çитернĕ. Общество кодексăн 5 статйине пăхăнманнине çирĕплетнĕ, ăна штраф тӳлеттерме йышăннă.

■ **Юрий СЕРЕГИН**

Яваплăх

Вăрă «капкăна» çакланчĕ

Çирĕм çул каялла Кашкăр Микули /хушамачĕ мар, ялта сарăлнă ячĕ-шывĕ/ Вăрнар районĕнчи Çăкаллă Явăшран Хураçырмана пурăнма куçрĕ. Тĕрĕсрех каласан – хĕрарăм патне киле кĕчĕ. Эпĕ вара килте пĕччен тăрса юлтăм. Ачасем уйрăлса тухрĕç. Хăйсен çемйипе пурăнаççĕ. Тепĕр чухне е райцентра, е Шупашкара каятăп, çĕр выртсах таврăнатăп.

Мунча алкумĕнче пуртăсем выртатчĕç. Пĕрне илемха тесе кĕтĕм те – вырăнĕнче çук! Ăçта? Усă курма никама та паманччĕ-çке. Хама шанманнипе мунчана, витене, сарайне кĕрсе пăхрăм – ниçта та тупаймарăм. Ултă пуртăран пĕрне те хăварман. Пурне те вăрласа кайнă. Вĕсене кăна мар, сава-пăрана та илнĕ.

Тепрехинче тĕп хулара çĕр выртма тиврĕ. Киле тепĕр кун çеç таврăнтăм. Ĕç хатĕрĕсен пӳлĕмĕнче: «Пăчкă-мăлатук çĕтмен-ши?» – текелесе сентресене пăхкаларăм – пĕри те тепри вырăнĕнчен хăпнине асăрхарăм. Илсе кайнă, ăна та, кăна та хăварман.

Иртнĕ çулла каллех темиçе кун килте пулаймарăм. Калинкке хăлăпне тытма алă тăснăччĕ кăна – картишрен Кашкăр Микули тухса тăчĕ. Çурăмĕ хыçĕнче – тулли михĕ. Ăна киле пăхса тăма каласа хăварман. Тӳрех: «Мĕн тăватăн ман килте!» – тесе сасă хăпартрăм. «Михӳпе мĕн вăрласа тухатăн?» – терĕм те хыпашлакаласа пăхрăм: сурăх çамĕ! Ниçта та йĕркеллĕ ĕçлеменскер выçăхса çитнĕ пулмалла: пилĕк чăх çамартине те илсе тухнă. Хăй ӳсĕр. Çак тĕслĕх пирки çийĕнчех право йĕркине сыхлакан органа пĕлтертĕм. Анчах вăрра явап тыттармарĕç.

Нумаях пулмасть Кашкăр Микули Хураçырмара тепĕр «паттăрлăх» кăтартрĕ: Николай Федоровăн урамри чус хăмисене пĕрре хăвармиччен картишне йăтрĕ. Хуçи кукăр алă çинчен полици уйрăмне пĕлтернĕ. Вăл хăмасене вырăнне тавăрттарчĕ. Халĕ ял çыннисем: «Çылăхлăскере явап тыттарĕç-ши?» – тесе иккĕленеççĕ. Мĕншĕн тесен халĕччен ăна пĕрре те çирĕппĕн айăпламан. Темиçе çул каялла пахчаран михĕпе çимĕç йăтса тухнă чух аллинченех ярса тытрăм. Кӳршĕсенне те вăрланă вăл.

Вăт çапла! Темле çын та пулать çут тĕнчере.

■ **Анатолий АЛЕКСЕЕВ.**
Вăрнар районĕ,
Хураçырма ялĕ

Ăна 15 çул шыранă

ЧР ШĔМĕн уголовлă шырав управленийĕн сотрудникĕсем Сургут хулинче 52 çулти хĕрарăма тытса чарнă. Ăна УК 159 статйипе пăхнă преступленисем тунă тесе шанмаççĕ. Çав преступленисем Шупашкарта 1997-1998 çулсенчех пулнă.

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн хĕрарăм Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕн наукăпа методика центрĕн корректорĕн должноçĕнче ĕçленĕ май çынсене Шупашкарти общежитисенче пӳлĕмсем илме пулăшмашкăн пултаратăп тесе суйнă. Çакăншăн вĕсенчен укçа илнĕ. Пĕтĕмпе 70 пин тенкĕ ытла – ун чухне тенке деноминацилеменнине кура хакласан самай пысăк укçа. Унпа хĕрарăм хăйĕн тĕллевĕсемпе усă курнă.

Çынсенчен укçа пухнă хыççăн вăл Сургута тухса кайнă, унта регистрациленмесĕр пурăннă. Вăл ăçтине нумаях пулмасть çеç палăртма май килнĕ. Ăна хупса хунă ĕнтĕ, асăннă статьян 2-мĕш пайĕпе айăпланса хĕрарăм 5 çуллăхах ирĕклĕхсĕр юлма пултарать.

■ **Е.ОРТИКОВ,**
ЧР прокуратурин уголовлă процесс тата оперативлă шырав ĕç-хĕлĕн надзорĕн пайĕн пуçлăхĕн çумĕ

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
пĕлтерӳ реклама
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕн судийсен статусĕ çинчен» саккунĕн 5-мĕш статйипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинчи Шупашкар хулинчи Ленин районĕн 6-мĕш суд участокĕн миравай судийин вакантлă должноçĕ уçăлни çинчен пĕлтерет.

Ыйтса çырнине Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕн судийсен статусĕ çинчен» саккунĕн 5-мĕш статйин 6-мĕш пунктĕнче палăртнă документсемпе пĕрле 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕччен ĕç кунĕсенче 8-12 тата 13-17 сехетсенче, 2014 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче 18 сехетчен йышăнаççĕ. Адресĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12-мĕш çурт, 302 пӳлĕм.

Ыйтса çырнисене хăçан тата ăçта, хăш вăхăтра пăхса тухассине претендентсене çирĕплетнĕ йĕркепе пĕлтереççĕ.

Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕн судийсен статусĕ çинчен» саккунĕн 5-мĕш статйипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинчи судьясен квалификаци коллегийĕ Чăваш Республикинчи Тăвай районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судийин вакантлă должноçĕ уçăлни çинчен пĕлтерет.

Ыйтса çырнине Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕн судийсен статусĕ çинчен» саккунĕн 5-мĕш статйин 6-мĕш пунктĕнче палăртнă документсемпе пĕрле 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕччен ĕç кунĕсенче 8-12 тата 13-17 сехетсенче, 2014 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче 18 сехетчен йышăнаççĕ. Адресĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12-мĕш çурт, 302 пӳлĕм.

Ыйтса çырнисене хăçан тата ăçта, хăш вăхăтра пăхса тухассине претендентсене çирĕплетнĕ йĕркепе пĕлтереççĕ.

Канашская районная администрация информирует население о предстоящем предоставлении земельного участка площадью 5084 кв. м с кадастровым номером 21:11:090801:197, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Среднекибечское, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:11:090801, в аренду сроком на 49 лет. Категория земель – земли сельскохозяйственного назначения. Разрешенное использование – для ведения сельскохозяйственного производства. Желающим приобрести вышеуказанные земельные участки обращаться с заявлением в каб. 30 администрации Канашского района по адресу: г. Канаш, ул. 30 лет Победы, 87, в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 8/83533/2-84-80.

Канашская районная администрация информирует население о предстоящем предоставлении земельного участка площадью 10520 кв. м с кадастровым номером 21:11:220403:109, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Чагасьское, в аренду сроком на 49 лет. Категория земель – земли сельскохозяйственного назначения. Разрешенное использование – для ведения сельскохозяйственного производства. Желающим приобрести вышеуказанные земельные участки обращаться с заявлением в каб. 30 администрации Канашского района по адресу: г. Канаш, ул. 30 лет Победы, 87, в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 8/83533/2-84-80.

ПРОДАЮ

10.Песок, гравий, **щебень, керамблок,** торф. Т. 8-919-671-61-46.

933.Кобылу жеребую – 45 тыс. руб., **жеребца** – 40 тыс. руб., **овец** Романовской и Цигейской пород на племя по 7 тыс. руб. Тел. 8-927-998-82-27.

УСЛУГИ

935.Бизнес на дому. Т. 389540.

чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен çеферичи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804,
"Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /ялăпла секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор И.Н.КЛЕМЕНТЬЕВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, ялăпла секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ: 28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

hypar2008@rambler.ru

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
pop408@rambler.ru
hypar@mail.ru

Хаçата "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă, "Чăваш Ен" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем ялăпла.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану сулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7006. Заказ 4544.